Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Ноябрь
25
юнкун
№ 230 (9139)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
Хаçат-журнал сарас ĕçе хăвăртлатмалла (1 стр.).
Районсенчи парторганизацисен конференцийĕсем (2 стр.).
П. Ильин.—Вăрман хатĕрлекенсен культура ыйтăвĕсене лайăхрах тивĕçтермелле (2 стр.).
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ. Финанспа кредит системин работникĕсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен (2 стр.).
И. Космииский. — Колхозсенчи тупăшсене тĕрĕс валеçер (3 стр.).
А. Балашов. — Ялти суту-илĕве вăйлатассишĕн (3 стр.).
Н. Минин.—Районти культура çуртĕнче (3 стр.).
Китайра промышленность предприятийĕсем тăваççĕ (4 стр.).
Хьюлетт Джонсон «Йоркшир пост» хаçата янă çыру (4 стр.).
Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ (4 стр.).
Совет Союзĕпе Германин хутăш комиссийĕн ларăвĕ (4 стр.).
П. Григорьев. — XVIII-мĕш ĕмĕрти чăваш архитекторĕ (4 стр.).

Халăха кирлĕ таварсен пахалăхне лайăхлатар

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăх ырлăхĕшĕн, унăн пурнăçĕн материальнăй тата культурăлла шайне ÿстерессишĕн куллен тимлĕн тăрăшаççĕ. Халĕх пурнăçламалли задача çакăн пек: икĕ-виçĕ çул хушшинче халăха апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем—аш-какайпа аш-какай продукчĕсем, пулăпа пулă продукчĕсем, çу, сахăр, кондитер таварĕсем, пир-авăр, тумтир, атă-пушмак, савăт-сапа, сĕтел-пукан тата культурăпа йăлара кирлĕ ытти япаласем парса тăрассине таткăлăнах ÿстермелле, халăха кирлĕ пур таварсене те чылай ытларах туса кăлармалла.

Çак пысăк задачăна пурнăçлас тесе, ССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Куллен кирлĕ промышленность таварĕсем туса кăларассине ÿстересси тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен», «Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ÿстересси тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен» постановленисем йышăнчĕç, çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне конкретлă заданисем пачĕç. Ку постановленисен политикăлла тата хуçалăхла пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Вĕсем партипе правительство совет çыннин пĕрмай ÿссе пыракан ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерессишĕн тăрăшнине çĕнĕрен кăтартса параççĕ.

Халăх валли промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларасси юлашки вăхăтра палăрмаллах вăйланчĕ, вăрçăчченхи шайран чылай иртсе кайрĕ. Çапах та куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе хальхи вăхăт тĕлне тунă ĕçсен пысăкăшĕ тата çак таварсен пахалăхĕ ĕçсыннисен ÿссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултараймаççĕ.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине хисеп енчен кăна ÿстернипе çырлахма юрамасть. Промышленность халăх валли туса кăларакан мĕнпур таварсен пахалăхне лайăхлатас ыйту та пысăк вырăнта тăрать. ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ промышленноçăн мĕнпур работникĕсем умне çакăн пек задача лартрĕç: паха, лайăх илемлетсе хатĕрленĕ таварсем туса кăлармалла. Совет çыннисен кăмăлне каякан япаласем туса кăларасси кашни предприятин, хуçалăх, парти тата профессилĕ организацисен тивĕçĕ пулса тăрать.

Пирĕн республикăри промышленность предприятийĕсенче ĕçлекенсем партипе правительство лартнă задачăсене пурнăçлассишĕн хавхаланса кĕрешеççĕ. Сĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ туса кăларакан продукцие çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенче ĕçсыннисем хавасланса илеççĕ. Вăл туса кăларакан сĕтел-пукан çирĕп те илемлĕ пулнипе палăрса тăрать. Ку комбинат Мускаври М. В. Ломоносов ячĕпе тăракан Государство университечĕн заказне чыслăн пурнăçларĕ. Сĕмĕрлере туса кăларнă япаласем халĕ тĕнчери чи пысăк наука дворецĕн залĕсене илем кÿреççĕ. Нумай пулмасть комбинат коллективĕ Мускаври ГУМ магазинĕ валли сĕтел-пукан тума правительство панă заданине ăнăçлă пурнăçланă, çакăншăн коллектива СССР Вăрманпа хут промышленность министерстви тав тунă.

Улатăр хулинчи промкомбинат, Шупашкарти лента тĕртекен фабрика, Шупашкарти макарон фабрики, Калинино районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕ ăнăçлă ĕçленине палăртмалла. Асăннă предприятисен коллективĕсем продукци туса кăларассине ÿстернипе пĕрлех, унăн пахалăхне те палăрмаллах лайăхлатса пыраççĕ.

Улатăрти атă-пушмак фабрики чылайранпа юлса пыратчĕ, продукци пахалăхĕшĕн кирлĕ пек кĕрешмесчĕ. Парторганизаци юлашки вăхăтра продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе мерăсем йышăннă. Халĕ фабрикăра кашни ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслеççĕ. Çакă вăл пĕчĕк кăлтăка та асăрхаса илме тата ăна çийĕнчех пĕтерме рабочисен ответлăхне ÿстерме май панă, фабрика туса кăларакан продукци чылай лайăхланчĕ ĕнтĕ.

Анчах таварсен пахалăхне малалла лайăхлатас тĕлĕшпе республикăри промышленность предприятийĕсем таткăлă улшăну тăвайман-ха. Уйрăмах вырăнти тата коопераци промышленноçĕн предприятийĕсем юлса пынине палăртмалла. Вĕсем туса кăларакан продукци пахалăхĕ тивĕçлĕ вырăнта мар. Первомайски райпромкомбиначĕ япăх пахалăхлă сĕтел-пукан туса кăларать. Пуканăн лармалли вырăнĕнче пăта вĕçĕсем пулаççĕ. Пукан пайĕсене техникăлла условисене пăхăнмасăр тăваççĕ. Райпромкомбинат туса кăларакан кирпĕчпе усă курма май килмест, ăна кирлĕ пек хĕртсе кăлармаççĕ, çавна пула вăл часах ванать е тĕпренет.

Шупашкарти «Кожупряж» артельте ку таранччен пысăк çитменлĕхсем пулса пынă. Артель председателĕ Воротилов юлташ хăйне шанса панă ĕç çине çиелтен пăхнă, коллектива продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешме мобилизацилемен. Унтан та ытларах, вăл тавар илекен совет çыннисене ултала çул çине тăнă. Атă путушне сăран е кожемит хурас вырăнне картон хунă, çавнашкал атăсене вара суту-илÿ организацийĕсене пĕрремĕш сортлă тесе пама хăтланнă. Тĕрĕсленĕ хыççăн атă путушне сăран е кожемит хунă тесех суя хутсем çырни палăрнă. Çакă вăл совет çыннисене улталанисĕр пуçне мĕн пултăр-ха ĕнтĕ?

Плана ассортимент енĕпе тултарманни пысăк çитменлĕх пулать. Кирлех мар продукцие планран ирттерсе туса кăларнине, плана ассортимент тăрăх тултарманнине партин XIX-мĕш съезчĕ хытă сивлерĕ. Республикăри чылай предприятисем ку енĕпе улшăну тăвайман. Вĕсем питĕ кирлĕ япаласенчен нумайăшне туса кăлармаççĕ. Чугун савăт-сапа, катка-пичке, сĕтел-пукан, йĕлтĕрсем, килсуртра кирлĕ ытти таварсем туса кăлармалли план уйрăмах çителĕксĕр пурнăçланса пырать.

Çакăн пек çитменлĕхсем вĕсем хăшпĕр артельсемпе предприятисен руководителĕсем халăх ыйтăвне тивĕçтерессишĕн кирлĕ пек тăрăшманни çинчен калаççĕ. Совет халăхĕ илемлĕ те лайăх, пысăк пахалăхлă таварсем ыйтать,—çакна яланах асра тытас пулать.

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн председателĕ Г. М. Маленков юлташ Верховнăй Советăн V-мĕш сессийĕнче çапла каларĕ: «Тавар илекен час-часах таварсем илемлĕрех пулнăшăн кăна ют çĕршывсенче туса кăларнă таварсене туянма тăрăшать,—çакăншăн ĕнтĕ промышленноçра ĕçлекенсен вăтанмалла», терĕ. Çавăнпа та таварсен пахалăхне лайăхлатнипе пĕрлех, вĕсене тулаш енчен илемлетсе кăларасси çине те тимлĕ пăхни кирлĕ.

Промышленность работникĕсен ответлăхне ÿстерни, туса кăларакан продукци пахалăхĕ мĕнлине тĕрĕслес ĕçе вăйлатни, работниксен творчествăлла активлăхне анлăрах сарса пыни, паха таварсем туса кăларассишĕн кĕрешни кирлĕ. Кашни предприяти пысăк пахалăхлă продукци туса кăларас тесе куллен тăрăшма тивĕç. Çак тĕллевпе чи паха продукци туса кăларассишĕн ăмăртакан бригадăсен шутне ÿстерсе пымалла, малта пыракансен опытне анлă сармалла. Фабрика чысĕшĕн кашни рабочи çине тăрса кĕрештĕр. Рабочисем хушшинчи социализмла ăмăртăва продукци пахалăхне тĕпрен лайăхлатас тĕллевпе ертсе пырас пулать.

Продукци пахалăхне лайăхлатас ĕçре техникăлла тĕрĕслÿ пайĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Мĕншĕн-ха суту-илÿ организацийĕсенче япăх пахалăхлă япаласем пулаççĕ? Ку вăл чылай чухне контролерсем тимсĕр пулнинчен килет. Хăшпĕр предприятисенче контролерсен пĕлĕвĕсемпе опычĕ çителĕксĕр, анчах вĕсене вĕрентме тивĕçлипе тăрăшмаççĕ.

Таварсене базăсемпе складсенче сыхласа усрассиçине, вĕсене сутма чĕркесси çине те тимлĕрех пăхни кирлĕ. Пирĕн совет çынни магазина пырать пулсан, хăйне тивĕçтерекен тавар илме май килнĕшĕн, хăй илнĕ тавар пахалăхĕ лайăх пулнăшăн, ăна лайăх чĕркесе панăшăн савăнтăр, кăмăллă пултăр, вăл хăй илнĕ тавар килтисене пурне те—çитĕннисене те, ачасене те савăнтарма пултарассине шанса тăтăр.

Халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерес, вĕсен пахалăхне лайăхлатас ĕçе парти организацийĕсен куллен ертсе пымалла. Предприятисенче политикăлла ĕçе малалла лайăхлатса пымалла, инженерсемпе техниксен, рабочисен халăх умĕнчи ответлăхне вăйлатмалла. Продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетесси, кашни заводăн, фабрикăн, промысла артелĕн тупăшлăхне ÿстересси çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла.

Халăха паха та çирĕп япаласем парассишĕн кĕрешер!

Çăкăр пĕçерекен промышленноçăн çĕнĕ предприятийĕсем

ХАБАРОВСК, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Хабаровскра механизациленĕ пекарня ĕçлеме пуçланă.

Крайри çăкăр пĕçерекен промышленность вĕçĕмсĕр ÿссе пырать. Предприятисенче мĕнпур йывăр ĕçсене механизацилеççĕ.

Хальхи вăхăтра çăкăр завочĕсемпе пекарнйĕсем 25 ытла тĕрлĕ изделисем, вăл шутра московски тата заварнăй çăкăр, булкăсем, тĕрлĕрен сухăрсем, кондитер таварĕсем тата ытти изделисем туса кăлараççĕ. Продукци пахалăхĕ те чылай лайăхланнă.

Çăкăр пĕçерекен промышленноçăн çĕнĕ предприятийĕсене нумай тăваççĕ. Изенги ятлă рабочи поселокра механизациленĕ пекарня туса пĕтереççĕ Амур çинчи Комсомольскра çăкăр пĕçерекен пысăк завод тăваççĕ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Пустав тĕртекен комбинат

ЧЕРНИГОВ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Хула сывăхĕнчи поселокра çăмран пустав тĕртсе кăларакан комбинат тунă çĕрте ĕçлекенсем валли пурăнмалли çуртсем тăваççĕ. Комбината 1954 çулта тума тытăнмалла.

Комбинат пысăк предприяти пулмалла. Тĕп корпус 16 гектар чухлĕ çĕр лаптăкĕ йышăнать. Мĕнпур ĕçсене пĕтĕмĕшпех механизацилеççĕ.

Предприяти çулталăкра 8 миллион метр ытла çăм пир-авăр тĕртсе кăларма пултарать.

Колхозниксем малта пыракансен ĕç меслечĕсене вĕренеççĕ

АЛЕКСЕЕВКА (Воронеж облаçĕ), ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Районти колхозсем пахча çимĕçпе пахча çимĕç вăррисем туса илес ĕçе вăйлатмалли, пахча çимĕçсемпе çĕрулми туса илнĕ çĕрте малта пыракан агротехникăпа усă курмалли план туса хатĕрленĕ. Çитес çуркунне 3.500 рама чухлĕ парник хуçалăхĕ организацилеме, çĕрнĕ тислĕкпе торф чÿлмекĕсем 3,5 миллион туса хатĕрлеме, çĕрулмипе пахча çимĕçсене тăваткал тĕмĕн çеç лартма палăртнă.

Халĕ пур колхозсенче те пахча çимĕçсемпе çĕрулми туса илес тĕлĕшпе малта пыракансен ĕç меслечĕсене вĕренме пуçланă. Çĕрулмипе пахча çимĕçсене тăваткал тĕмĕн лартмалли меслете тĕпчесе вĕренес тĕллевпе, колхоз председателĕсен, агрономсен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсемпе пахча çимĕç бригадисен бригадирĕсен семинарне ирттернĕ.

Ялхуçалăх пĕлĕвĕсене пропагандăлаççĕ

ЕРЕВАН. Армени ССР-чи политикăлла тата наукăлла пĕлÿсене сарас тĕлĕшпе ĕçлекен общество ялхуçалăх пропагандине сарсах пырать.

Республикăри колхозсенче, совхозсемпе МТС-че ученăйсем, ялхуçалăх специалисчĕсемпе ялхуçалăхĕнче малта пыракансем пурĕ 100 çын ытла лекцисем вулаççĕ. Юлашки виçĕ уйăх хушшинче вĕсем колхоз ĕçченĕсем валли «КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕ тата ялхуçалăхĕн задачисем», «Малта пыракан мичуринла агробиологи» тата ытти темăсем тăрăх 500 лекци вуласа панă.

Общество Алавердински, Апарански тата ытти районсенче научнăй сессисем ирттернĕ. Вăл сессисем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ячĕпе пулнă. Унта ялхуçалăх специалисчĕсем докладсем туса панă. (ТАСС).



СТАЛИНГРАДГИДРОСТРОЙ. Зеленый утрав çинче бетон завочĕ тăваççĕ.
А. МАКЛЕЦОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Предприятисем колхозсене пулăшаççĕ

КУЙБЫШЕВ. ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Облаçри промышленность предприятийĕсем МТС-сене, колхозсене тата совхозсене шефа илнĕ.

Подшипниксем тăвакан завод Алексеевски районне шефа илнĕскер, хăйĕн ытлашши оборудованийĕнчен МТС-ăн юсав мастерскойĕ валли токарнăй станоксем сиччĕ уйăрса панă. Подшипниксем тăвакан цех «Прожектор» колхоза тимĕрçĕ лаççи тунă çĕрте тата выльăх-чĕрлĕх ферминчи йывăр ĕçсене механизациленĕ çĕрте пулăшу панă.

«Автотрактородеталь» завод хăй шефа илнĕ Подъем-Михайловски МТС-ĕнчи электрооборудование юсама пулăшнă. Предприятири комсомолецсем трактор бригадисем валли тĕрлĕ инструментсем пама йышăннă. Çав инструментсене перекетлесе хăварнă материалсенчен туса хатĕрленĕ.

Нефтяниксем чылай колхозсенче пусăсем тума тытăннă. Вăл пусăсем выльăх-чĕрлĕх фермисене шыв парса тăмалла. Йывăçран япаласем тăвакан предприятисем парник рамисем хатĕрлеççĕ.

Колхозниксен ĕçри активлăхĕ ÿсет

СТРАШЕНЫ (Молдаван ССР-ĕ), ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Районти ялхуçалăх артелĕсенче çулталăкри ĕçсен малтанхи итогĕсене пăхса тухма тытăннă. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз обществăлла хуçалăхран 10 миллион тенкĕ ытла тупăш илнĕ. Иртнĕ çулта ĕçлеме пултаракан колхозниксен 34 проценчĕ ĕçкунĕсен минимумне тултарман пулсан, халĕ колхозра 120 ĕçкунĕнчен кая тунă пĕр колхозник та çук. Пахча çимĕç лартса ÿстернĕ çĕрте ĕçленĕ В. Ворническу, виноград лартса ÿстерекен Г. Аврам, полевод З. Николаеску тата ытти нумай колхозниксем 500—800-шер ĕçкунĕ тунă.

Ĕçкунĕсемшĕн ытларах тÿлеме тытăннă май колхозниксен ĕçри активлăхĕ ÿснĕ. Кăçал кĕркунне аванс тăрăх панă тĕштырăпа укça иртнĕ çулта мĕнпур ĕçкунĕсемшĕн панă тĕштырăпа укça чухлĕ пулнă.

Молотов ячĕпе, Жданов ячĕпе, Котовский ячĕпе тата ытти ялхуçалăх артелĕсенчи колхозниксем обществăлла ĕçе хутшăнасси 20—30 процент ÿснĕ. Çак колхозсенче тупăш иртнĕ çулхинчен 1,5—2 хут пысăкрах пулнă.

ÇĔНĔ ФИЛЬМ

ЛЕНИНГРАД, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ленинградри кинохроника студийĕ «Возрожденное Пулково» ятлă фильм кăларнă. Фильм СССР Наука академийĕн тĕп астрономи обсерваторийĕн ĕçĕсем çинчен каласа парать.

Фильмра Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн юсанă обсерваторине кăтартса панă. Фильм çавăн пекех Пулковори астрономсен ĕçĕсемпе паллаштарать. Вĕсем çĕрлехи пĕлĕте сăнаççĕ, питĕ пысăк горизонтальнăй хĕвел телескопĕ пулăшнипе кăнтăрла хĕвеле сăнаççĕ.

Колхозсем валли йывăç материалсем

АРХАНГЕЛЬСК, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Архангельскри вăрман базисенчен кулленех Украинăри, Мускав, Курск, Рязань, Крым облаçĕсенчи потребительсен кооперацийĕсем валли йывăç тиенĕ эшелонсем тухса каяççĕ. Ноябрь уйăхĕ пуçланнăранпа çĕршыври вăрман сахал ÿсекен районсенчи колхозсемпе колхозниксене сутма 650 вагон ытла йывăç материалсем ăсатнă.

Хĕрлĕ эрех тумалли сезон вĕçленнĕ

КИШИНЕВ. Молдаври Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствинче хĕрлĕ эрех тумалли сезонăн итогĕсене тунă. Эрех тумалли материалсем иртнĕ çулхинчен икĕ миллион декалитр ытларах илнĕ. Ку сезонра виноградран эрех тăвассине пĕтĕмĕшпех механизациленĕ. Эрехсене технологин типовăй схемисем тăрăх туса хатĕрленĕ.

ЯЛТА. «Массандра» эрех комбиначĕн коллективĕ эрех тумалли сезона вĕçленĕ. Чи лайăх сортлă хĕрлĕ эрехсем иртнĕ çулхинчен 65 пин декалитр ытларах туса кăларнă. Крым облаçĕнче пысăк виноградниксем ĕрчетеççĕ, хĕрлĕ эрех тăвакан çĕнĕ предприятисем нумай тăваççĕ. Азовски тата Коктебельри заводсене туса пĕтернĕпе пĕрех. Севастопольте виноград сĕткенĕсем туса кăларакан завод, «Массандра» комбинатăн территорийĕнче — дессертнăй эрехсем тăвакан пысăк завод лартаççĕ.

Ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС).

Байкал леш енчи çулсем çинче

ЧИТА, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Енер облпотребсоюз базинчен инçетри Кырински, Акшински тата Улетовски районĕсене 20 ытла автомашина тухса кайнă. Вĕсем çине промышленноçпа апат-çимĕç таварĕсем, строительство материалĕсем тата литература тиенĕ. Каялла килнĕ чухне автоколонна колхозсенчен аш-какай, сĕт тата ытти апат-çимĕç илсе килет. Çак апат-çимĕçе Чита хулинчи ĕçсыннисене сутаççĕ.

Автомобиль транспорчĕ облаçри нумай районсемпе сыхăну тытмалли пĕртен-пĕр транспорт пулса тăрать. Тайгари тата çеçенхирсенчи çулсем çинче кунĕн-çĕрĕн машинăсем çÿреççĕ. Груз турттармалли автомашинăсемпе тырă, ялхуçалăхĕ валли машинăсем, вăрман промышленноçĕ валли оборудовани илсе каяççĕ. Автотранспорт работникĕсем кăçал пĕлтĕрхинчен чылай ытларах груз турттарнă.

Шоферсем хушшинче автомашинăсене ытларах вăхăт çÿремелле тăвассишĕн ăмăрту сарăлнă.

Хаçат-журнал сарас ĕçе хăвăртлатмалла

1954 çулшăн хаçат-журнал çырăнтармалли срок тухиччен шутлă кунсем юлчĕç. Апла пулин те пирĕн республикăра çак политикăлла пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç тивĕçлипе пулса пымасть.

Ĕçсыннисем хушшинче центрти хаçатсемпе журналсем сармалли плана пĕтĕмпе те 70,6 процент, республикăри хаçатжурналсемпе районсенчи хаçатсем сармалли плана 44,9 процент кăна тултарнă. Уйрăмах ку ĕç Пăрачкав, Куславкка, Первомайски, Тăвай, Елчĕк, Етĕрне, Сĕнтĕр районĕсенче чăтма çук япăх пулса пырать. Асăннă районсенче республикăри хаçат-журналсемпе районсенчи хаçатсене сарас ĕç уйрăмах начар. Тăвай районĕнче, сăмахран, республикăри «Коммунизм ялавĕ», «Советская Чувашия», «Çамрăк коммунист», «Молодой коммунист» тата районти «Сталин ялавĕ» хаçатсене сарма палăртнă хисепрен виçĕ пайран пĕр пайĕ чухлĕ кăна сарнă.

Мĕнрен килет-ха хаçат-журнал сарас ĕç çакăн пек начар пулса пыни? Чи малтанах, çакна палăртмалла: партин вырăнти организацийĕсем, уйрăмах КПСС райкомĕсен пропагандăпа агитаци пайĕсенчен чылайăшĕ ĕçсыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас ĕçпе кирлĕ пек интересленмеççĕ. Çавна май ку ĕçшĕн тÿрремĕнех ответлă органсем—сыхăну кантурĕсемпе республикăри «Союзпечать» уйрăмĕн районти организаторĕсем сÿрĕк ĕçлеççĕ. Вĕсем хаçат-журнал подпискине йышăнассине ку таранччен лайăх йĕркелеймен, хăшпĕр сыхăну кантурĕсемпе «Союзпечать» работникĕсем хаçат-журнал çырăнтарас ĕç хăй тĕллĕнех пуласса шанса пурăнаççĕ.

Сăмахран. Муркашри сыхăну уйрăмĕ хаçат-журнал сарас ĕçе тивĕçлипе хакламасть. Çавăнпа та кунта ноябрĕн 19-мĕшĕ тĕлне пĕр почтальон та хаçат-журнал сарма панă задание пурнăçламан. Хаçат-журналсене уйрăм подписчиксене çырăнтарас ĕç начар пынипе пĕрлех, кунта 24 колхозран 7-шĕнче кăна колхоз правленийĕпе фермăсем валли хаçат-журнал çырăнса илнĕ. Очăкасси, Тойкилтĕ ял Совечĕсем шкулсемпе вулав çуртсем валли хаçат-журнал çырăнса илме халĕ те укçа тенкĕ уйăрса паман. Хаçат-журнал подпискине пухма уйăрнă хăшпĕр обществăлла уполномоченнăйсем халĕ те ĕçе тытăнманпа пĕрех. Кун пек çитменлĕхсем ытти районсенче те сахал мар.

Анчах мĕн тăваççĕ-ха хаçат-журнал сарас ĕçри çакăн пек питех те пысăк çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе республикăри сыхăну управленийĕпе унăн «Союзпечать» уйрăмĕ? Тÿрех каламалла: вĕсем халлĕхе ку ĕç вырăнсенче мĕнле пыни çинчен ытларах сводкăсем тăрăх кăна пĕлеççĕ-ха. «Союзпечать» уйрăмĕн начальникĕ И. Дмитриев юлташ районсенчи работниксене тĕрлĕрен директивăсемпе кăтартусем яра-яра панипех çырлахса ларать. Районти работниксене ĕçлеме вĕрентни, çийĕнчех тивĕçлĕ пулăшу пани çук-ха.

Республикăра обществăлла уполномоченнăйсем пурĕ 2.038 çын шутланаççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ партипе совет, профсоюзпа комсомол организацийĕсем хăйсене хушнă ĕçе чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Улатăр хулинчи «Красная швея» артельти обществăлла уполномоченнăй А. Арлашкина юлташ тăрăшнипе унта ĕçлекенсенчен кашниех çитес çулшăн хаçат-журнал илсе тăма çырăннă. Çавăн пекех «Союз инвалидов» артельти обществăлла организатор Любимов юлташ çулсерен хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлет. Вăрмарти сĕтел-пукансем тăвакан фабрикăри обществăлла уполномоченнăй С. Кондратьев юлташ кăçал пурĕ 7.200 тенкĕлĕх хаçат-журнал сарнă. Вăл шутран «Коммунизм ялавĕ»—59 экземпляр, «Советская Чувашия»—76 экземпляр, «Çамрăк коммунист»—32 экземпляр, районти «Хĕрлĕ ялав» хаçата—47 экземпляр сарнă. Кунпа пĕрлех вăл хăй те 340 тенкĕлĕх хаçат-журнал çырăннă.

Тăрăшса ĕçлекен обществăлла уполномоченнăйсем кашни районтах, кашни колхозрах пур. Анчах вĕсен опытне «Союзпечать» органĕсем обществăлла уполномоченнăйсем хушшинче сарма тăрăшмаççĕ.

Хаçат-журнал сарас ĕç мĕнле пынине районсенчи хаçатсенче тăтăшах çутатса тăрас пулать. Анчах вĕсенчен чылайăшĕ ку таранччен çак пысăк ĕçрен пăрăнса тăраççĕ. Чăнах, хаçат-журнал подпискине йышăнни çинчен хутран-ситрен пĕлтерÿсем е пĕчĕк заметкăсем пичетленкелеççĕ, анчах вĕсем хаçат-журнал сарас ĕçре малта пыракансен опытне пухса пĕтĕçтермеççĕ, хаçат-журнал сарас ĕç мĕншĕн вăраххăн пынин сăлтавĕсене уçса памаççĕ. Муркаш районĕнчи «Колхозник сасси» хаçат вара пачах тĕлĕнмелле позици йышăннă. Вăл районти ĕçсыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас ĕç питех те сÿрĕккĕн пынишĕн мĕнпур айăпа «Союзпечатĕн» районти организаторĕ М. Тихонов юлташ çине йăвантарать. Чăнах та ĕнтĕ Тихонов юлташ ку тĕлĕшпе çаврăнăçусăр ĕçлет. Анчах вăл пĕччен пур çĕрте те ĕçсыннисене пичет пĕлтерĕшĕ çинчен, çĕршывра мĕнле хаçатсем тухса тăни тата вĕсене çырăнса илмелли условисем çинчен каласусем ирттерме темĕн чухлĕ тăрăшсан та ĕлкĕрес çук. Ку ĕçре «Союзпечать» работникĕсене вырăнти партипе совет, профсоюзпа комсомол организацийĕсем куллен пулăшса тăмалла. «Колхозник сасси» хаçат вара кун çинчен пачах асăнмасть.

Хаçат-журнал сарасси — политикăлла пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç. Унăн ăнăçлăхне чи малтанах вырăнти парти организацийĕсем ĕçсыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас ыйтупа куллен-кун интересленни, ку ĕçе кирлĕ пек ертсе пыни татса парать. Çавăнпа та КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсен, уйрăмах парти комитечĕсен пропагандăпа агитаци пайĕсен 1954 çулшăн хаçат-журнал сарас ĕç юлса пынине хăвăрт пĕтермелле. Подписка кампанийĕ вĕçленичченех юлнă вăхăтпа усă курса, çитес çул кашни кил, кашни семье хаçат-журнал çырăнса илмелле тăвас пулать.

Колхозсемпе МТС-сенче ĕçлекенсем хушшинче хаçат-журнал сарнă чухне ялхуçалăх изданийĕсен тиражне ытларах вырнаçтарасси çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Ку ĕçре партин вырăнти организацийĕсемпе сыхăну уйрăмĕсене КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти пленумĕн решенийĕ тăрăх МТС-семпе колхозсене ялан ĕçлеме янă çынсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ, пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ те.

Республикăра çавăн пекех «Çамрăк коммунист» хаçатăн, «Ялав» журналăн, «Тăван Атăл» альманахăн тиражĕсем те чылай сарăлса çитмен. Ку тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕсен, çутĕç пайĕсен, партипе комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен çине тăрса ĕçлемелле.

РАЙОНСЕНЧИ ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН КОНФЕРЕНЦИЙӖСЕМ

СӖНТӖРВӐРРИ

Районти ялхуçалӑхӗ мӗншӗн юлса пырать, колхозсенче çӗрӗç культурине ÿстерес тӗлӗшпе мӗн тумалла, вӑйлӑ тырпул, пахча çимӗç туса илме тата обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх йышне ÿстерме мӗнле резервсем пур?—Çак ыйтусем тӗп вырӑнта тӑчӗç районти парторганизаци VIII-мӗш конференцийӗнче.

Парти райкомӗн ӗçӗсем çинчен отчетлӑ доклад туса, КПСС райкомӗн секретарӗ Ф. Романов юлташ юлашки вӑхӑтра партилле-организацилле тата партилле-политикӑлла ӗçе кӑштах вӑйлатнине, колхозсене тата машина-трактор станцине аппаратвӑрах ертсе пыма тытӑннине палӑртрӗ.

Анчах парти райкомӗ пуçламӑш парторганизацисен секретарӗсемпе тата колхоз председателӗсемпе начар çыхӑннӑ, вӗсене питӗ çителӗксӗр пулӑшать.

— КПСС райкомӗн секретарӗсем колхоз бригадисене çитсе курмаççӗ, ӗçри çитменлӗхсене пӗтерме пулӑшмаççӗ,—терӗ Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Душкин юлташ.

— Районта ялхуçалӑх специалисчӗсене колхозсене ячӗç те йӑпланса ларчӗç, вӗсен ӗçӗпе, пурнӑçӗпе интересленмеççӗ, ялта политикӑлла ӗçе курма çук,—тет Жирнов юлташ.

Чӑнах та, парти райкомӗн пленумӗсенче, райсоветӑн сессийӗсенче тата тӗрлӗ канашлусемпе пухусенче паха решенисем сахал мар йышӑннӑ. Уй хыççӑн çав решенисене колхозсене çитерӗ-и, вӗсене пурнӑçлас ӗç мӗнле пырать,—тӗрӗслекене никам та пулман.

Районти 22 колхозран пӗри те тырпул тухӑçлӑхне ÿстермелли государство планне тултарман.

МТС начар ӗçлени çинчен калаçмасӑр пӗр пленум та, пуху та иртмен, вӑл вара çав-çавах ӗçре улшӑнусем тумасть. Пӗлтӗрпе кӑçал государство района çӗнӗ самоходнӑй комбайнсем, вӑйлӑ тракторсем тата ытти ялхуçалӑх машинисем нумай парса пулӑшрӗ. Халӗ ӗнтӗ кашни колхозра уй-хир ӗçӗсене вӑхӑтра тата лайӑх тума тракторсем те, комбайнсем те çителӗклӗ. Апла пулсан та, çӗрӗç культурине вӑйлатас, тӑпра структурине аванлатас ӗçсем тапранмасӑр пӗрех. МТС-ра ку тарана çитиччен кадрсем тупса çитермен. Кӑçал трактористсем пулман пирки 13 трактор ӗçлемесӗр ларчӗç, Илларионов юлташ ертсе пыракан трактор бригадисӗр пуçне ыттисем пурте пекех трактор ӗçӗсен планне тултарман. Комбайнсемпе сложнӑй молотилка машиновечӗсем те чылайӑшӗ ӗç нормине тултарман. Паянхи куна çурхине акма кирлӗ вӑрлӑхсем хатӗр мар.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси, унӑн тухӑçлӑхне ÿстересси — районти ялхуçалӑхӗн питех те кая тӑрса юлнӑ отраслӗ. Хӑшпӗр колхозсен фермисенче выльӑхсен йышӗ сахал. Мичурин ячӗпе тӑракан, «Путь к коммунизму» колхозсенче нумай ӗнесем хӗсӗр юлнӑ. Районта выльӑх апачӗ хатӗрлеме пур майсем пулсан та, фермӑсенче выльӑх апачӗ çителӗксӗр.

Çак çитменлӗхсем çинчен КПСС райкомӗпе райсовет исполкомӗ пӗлеççӗ-и? Пӗлеççӗ кӑна мар, вӗсене колхозсенче пулса хӑйсем курнӑ, райком инструкторӗсене ялсене ярса тӗрӗслеттернӗ, вара райком бюровӗнче сÿтсе явнӑ, анчах çавӑн хыççӑн колхозра ӗç мӗнле улшӑнса пынипе сахал интересленнӗ. Район республикӑра юлса пырать пулсан та паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗçлекен уй-хир, трактор бригадисем, доярӑсем, свинаркӑсем, сурӑх пӑхакансем, конюхсем сахал мар. Парти райкомӗ çак ӗç сине çителтен пӑхнӑ пирки çеç ялхуçалӑхӗнче малта пыракансен опычӗ мӗнпур колхозниксен тата МТС механизаторӗсен тивӗçӗ пулса тӑрайман.

Республикӑри хӑшпӗр организацисем, пуринчен малтан Ялхуçалӑхӗпе хатӗрлев министерстви Сӗнтӗрвӑрри районне шутсӑр начар пулӑшаççӗ. Сӑмахран, машина-трактор станцийӗнче халӗ ялхуçалӑх машинисене лартма сарай, гараж тата механизаторсем валли общежити çук, апла пулсан та Ялхуçалӑхӗпе хатӗрлев министерстви çак çуртсене тума 1954 çулхи плана та кӗртмен.

Минераллӑ удобренисене пурне те пекех республикӑна чугун çулпа кӳрсе килеççӗ, Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи колхозсемшӗн вара чугун çул çывӑх мар, çавӑнпа тата Ялхуçалӑхӗпе хатӗрлев министерстви уйӑрса паракан минераллӑ удобренисене колхозсем кӳрсе килеймеççӗ. Çак çитменлӗхе пӗтерме те йывӑр мар, шыв çулӗ уçӑлсан удобренисене пӑрахутсемпе е баржӑсемпе çӑмӑллӑнах илсе çитерме пулать, анчах ӑна ку таранччен темшӗн тумаççӗ.

Çавӑн пекех Чӑвашсоюз колхозсенчи строительство валли шифрсем, çуртсем çине витмелли тимӗр питӗ сахал уйӑрса парать.

Паллах, районти ялхуçалӑхӗпе хатӗрлев управленийӗ, парти райкомӗпе райсовет исполкомӗ хӑйсем те министерство умне тивӗçлӗ требованисем лартман.

Райкомӑн организацилле пленумӗ КПСС райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ пулма Ф. Романов, райком секретарӗсем пулма Т. Соколов тата С. Кузовчиков юлташсене суйларӗ.

Н. НАМАНГАН.

КРАСНОАРМЕЙСКИ

Докладчик тата конференцире тухса калакансем районти парторганизаци партин XIX-мӗш съезчӗн кӑтартӑвӗсемпе партин Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенийӗсене пурнӑçласа, хуçалӑхпа культура строительствинче чылай ÿсӗмсем тунине палӑртрӗç. Колхозсем кӑçалхи ялхуçалӑх ӗçӗсене пӗлтӗрхинчен лайӑхрах вӗçленӗ, тырпул тухӑçлӑхне ÿстернӗ.

Анчах районти ялхуçалӑхӗ çителӗксӗр аталанса пырать. Чылай колхозсем пӗчӗк тухӑçлӑ тырпул, çӗрулмипе пахча çимӗç туса илеççӗ, выльӑх-чӗрлӗх тухӑçлӑхне ÿстермеççӗ. 31 колхозран икӗ колхозра кӑна пусӑ çаврӑнӑшне йӗркелесе çитернӗ, агротехникӑлла ӗçсен комплексне колхозсем пурнӑçласа пымаççӗ, колхозсенчи пур ресурсӗсемпе ӗçре çаплах çителӗксӗр усӑ кураççӗ.

Делегатсем КПСС райкомӗпе райсовет исполкомне выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе çителӗксӗр ертсе пынӑшӑн хытӑ критиклерӗç.

А. Иванов, М. Волков, П. Кузьмин делегатсем райкомпа райсовет исполкомӗ колхозсен экономикине тӗплӗн тӗпчесе вӗренменнине, кашни колхозра, унӑн хӑйне евӗрлӗ уйрӑмлӑхӗсене шута илсе конкретлӑ ертсе пыманнине палӑртрӗç.

Григорьевпа Кузьмин делегатсем районти парторганизацире критикӑпа самокритика çителӗксӗр саралса пынине палӑртрӗç.

— Райком секретарӗ А. Мустакова юлташ район Совечӗн ларӑвӗсенче ялан пулать, çакӑ питӗ аван,—терӗ Кузьмин юлташ.— Анчах вӑл пире, исполком президиумӗн ытти членсене, усӑçӑн тухса калама чарать. Çапла туни коллективлӑн ертсе пырас принципа çирӗплетме кансӗрлет.

КПСС обкомӗ пӗлтӗр районта ялхуçалӑх артелӗн Уставне сӗмсӗррӗн пӑснисене палӑртса, вӗсене тӗппипех пӗтерме хушса хӑварнӑччӗ. Анчах парти райкомӗ çак йӑнӑша халӗ те тÿрлетсе çитермен. Транспорт инвентарӗсене паянччен колхозниксен килӗсенче усраççӗ. Колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗсем те çаплах сайра хутра кӑна пулаççӗ.

Райком колхозсемпе МТС-ри ӗççыннисен социализмла ӑмӑртӑвне çителӗксӗр ертсе пырать. Красноармейски районӗ Çӗрпӳ районӗпе ӑмӑртать, анчах çав ӑмӑртура илнӗ обязательствӑсене мӗнле пурнӑçлани çинчен никам та пӗлмест.

Райкомӑн организацилле пленумӗ КПСС райкомӗн секретарӗсем пулма А. Мустакова, Н. Финдюков тата Н. Егоров юлташсене суйларӗ.

Н. ОРЛОВ.
(Хамӑр корр.).

ВӐРНАР

Отчетлӑ доклада КПСС райкомӗн секретарӗ И. Александров юлташ парти райкомӗпе райсовет исполкомӗ хуçалӑхпа культура строительствине ертсе пырас ӗçре тунӑ çитӗнӳсемпе пӗрле чылай çитменлӗхсем пуррине палӑртрӗ. Доклада илсе кӑтартнӑ тӗслӗхсем хӑшпӗр колхозсенче халӗ те çӗрӗç культури тата обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх тухӑçлӑхӗ пӗчӗккине кӑтартса параççӗ.

КПСС райкомӗ ялхуçалӑхне ертсе пырас тӗлӗшпе хӑйӗн ӗçне КПСС Центральнӑй Комитечӗ хушнӑ пек улӑштарса çитереймен-ха. Райкомпа пуçламӑш парторганизацисем партилле ӗçӗн тӗп ыйтӑвӗсемпе сахалтарах интересленеççӗ. Йышӑннӑ решенисем пурнӑçа мӗнле кӗрсе пынине тӗрӗслесе пымаççӗ.

Конференцире МТС руководителӗсене колхозсемпе тунӑ договорсене çителӗксӗр пурнӑçланӑшӑн критиклерӗç. Ялхуçалӑх специалисчӗсене юлса пыракан колхозсене малта пыракан колхозсенчен кайран ярса панӑ. «Большевик» колхоз хуçалӑхри чылай енӗсемпе юлса пырать пулин те паянхи куна та унта специалист ярса паман.

Кольцовкӑри Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ колхоз председателӗ Социализмла Ӗç Геройӗ Коротков юлташ колхозӑн кӑçалхи çитӗнӗвӗсем çинчен каласа пачӗ.

Григорьевпа Шлыков юлташсем районти ертсе пыракан организацисен руководителӗсем массӑсемпе çителӗксӗр çыхӑну тытни çинчен каларӗç. Парти райкомӗпе райсовет исполкомӗн ертсе пыракан работникӗсем колхоз производствинчи ӗçсене тӗплӗнрех вӗренсе ертсе пыма тӑрӑшмаççӗ. Райком работникӗсем колхозсене машинӑпа вӑхӑтлӑха кӑна пырса каяççӗ.

Прение пурӗ 23 делегат тухса каларӗ.

КПСС райкомӗн организацилле пленумӗ райком секретарӗсем пулма И. Александров, А. Шлюпкин, М. Алексеев юлташсене суйларӗ.

М. ВАСИЛЬЕВ.
(Хамӑр корр.).

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн
УКАЗӖ

Финанспа кредит системин работникӗсене орденсемпе тата медальсемпе наградӑласси çинчен

Чӑваш АССР-ӗ тӑрӑх

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ 1951 çулхи июлӗн 18-мӗшӗнче кӑларнӑ Указне килӗштерсе, нумай вӑхӑт хушши лайӑх ӗçленӗшӗн наградӑлас:

ЛЕНИН ОРДЕНӖПЕ

1. Иван Алексеевич Веденеева—Госбанкӑн республикӑри кантурӗн хуласем енӗпе ӗçлекен управленийӗн инспекторне.
2. Петр Ефимович Иванова — Улатӑр районӗнчи финанс пайӗн заведующине.
3. Александр Иванович Леонова—республика финанс министерствин сектор начальникне.
4. Владимир Тимофеевич Тимофеева—Госстрахӑн Елчӗк районӗнчи инспекцийӗн аслӑ инспекторне.

ӖÇЛӖХ ХӖРЛӖ ЯЛАВ ОРДЕНӖПЕ

1. Виктор Михайлович Виноградова — Госбанкӑн республикӑри кантурӗн инспекторне.
2. Семен Кириллович Кириллова — республикӑри коммунальнӑй банк управляющине.

«ӖÇРИ ХАСТАРЛӐХШӐН» МЕДАЛЬПЕ

1. Степан Васильевич Виноградова — Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи финанс пайӗн главнӑй бухгалтерне.
2. Емельян Иванович Горланова — Етӗрне районӗнчи 4438-мӗш номерлӗ тӗп перекет кассин аслӑ кассирне.
3. Федор Семенович Гущинова—Шӑмӑршӑ районӗнчи 4427-мӗш номерлӗ тӗп перекет кассин аслӑ кассирне.
4. Геннадий Иванович Иванова—Калинино районӗнчи финанс пайӗн инспекторне.
5. Петр Николаевич Кудрявцева — Госстрахӑн Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи инспекцийӗн инспекторне.
6. Мария Брониславовна Мусялине — Госбанкӑн республикӑри кантурӗн хуласем енӗпе ӗçлекен управленийӗн аслӑ кассирне.
7. Вера Федоровна Русиновӑна—Госбанкӑн республикӑри кантурӗн аслӑ бухгалтерне.
8. Мария Александровна Снежицкаяна—Госбанкӑн республикӑри кантурӗн группа руководительне.
9. Вера Ивановна Филипповӑна—Госбанкӑн республикӑри кантурӗн касса руководительне.
10. Александр Федорович Хохлова — Чкаловски районӗнчи финанс пайӗн заведующине.
11. Александр Алексеевич Ятрушева—Госбанкӑн республикӑри кантурӗн пай начальникне.

«ӖÇРЕ ПАЛӐРНӐШӐН» МЕДАЛЬПЕ

1. Пелагея Федоровна Алендеевӑна — Вӑрмар районӗнчи финанс пайӗн главнӑй бухгалтерне.
2. Клавдия Васильевна Аршиновӑна—Шупашкар хулинчи финанс пайӗн аслӑ бухгалтерне.
3. Александр Николаевич Богданова — Госбанкӑн республикӑри кантурӗн инспекторне.
4. Татьяна Ивановна Бородинӑна — Госстрахӑн Комсомольски районӗнчи инспекцийӗн аслӑ бухгалтерне.
5. Макар Васильевич Васильева — Госстрахӑн республикӑри управленийӗн инспекторне.
6. Захар Егорович Волкова — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи финанс пайӗн заведующине.
7. Михаил Гаврилович Гаврилова — Госбанкӑн Калининӑри уйрӑмӗн управляющине.
8. Мария Гавриловна Гавриловӑна — Тӑвай районӗнчи финанс пайӗн налог агентне.
9. Ольга Ивановна Годуновӑна — Улатӑр районӗнчи 7508-мӗш номерлӗ тӗп перекет кассин аслӑ кассирне.
10. Таисия Дмитриевна Горловскаяна—Госбанкӑн Шӑмӑршӑри уйрӑмӗн бухгалтерне.
11. Виталий Данилович Данилова — республикӑри коммунальнӑй банкӑн управляющи заместительне—пай начальникне.
12. Иван Данилович Демидова — Госстрахӑн Вӑрмар районӗнчи инспекцийӗн инспекторне.
13. Анастасия Андреевна Дорожновӑна—Советски районӗнчи финанс пайӗн налог агентне.
14. Любовь Егоровна Егоровӑна — Госбанкӑн Шупашкар районӗнчи Кӳкеç ялӗнчи уйрӑмӗн аслӑ кассирне.
15. Григорий Матвеевич Иванова — Госстрахӑн Куславкка районӗнчи инспекцийӗн аслӑ инспекторне.
16. Федор Иванович Иванова — Çӗрпӳ районӗнчи финанс пайӗн заведующине.
17 Семен Иванович Игряшова — Куславкка районӗнчи финанс пайӗн инспекторне.
18. Ольга Дмитриевна Калентьевӑна—Шупашкар хулинчи 60/20-мӗш номерлӗ перекет кассин кассирне.
19. Ксения Кирилловна Кирилловӑна—Шупашкар районӗнчи финанс пайӗн налог агентне.
20. Надежда Михайловна Кудряшовӑна—Госбанкӑн Шӑмӑршӑри уйрӑмӗн бухгалтерне.
21. Яков Христофорович Кузьмина — Первомайски районӗнчи финанс пайӗн главнӑй бухгалтерне.
22. Ананий Максимович Максимова — Госбанкӑн Вӑрмарти уйрӑмӗн аслӑ инспекторне.
23. Тамара Ивановна Медведевӑна — Улатӑр районӗнчи финанс пайӗн главнӑй бухгалтерне.
24. Андрей Михайлович Михайлова — перекет кассисемпе государство кредичӗ управленийӗн пай начальникне.
25. Евгения Александровна Михайловӑна — Шупашкар хулинчи финанс пайӗн инспекторне.
26. Алексей Иванович Михалева — Госбанкӑн республикӑри кантурӗн инкассаторне.
27. Александра Григорьевна Никоноровӑна—Канаш районӗнчи финанс пайӗн аслӑ инспекторне.
28. Александра Платоновна Платоновӑна — Госстрахӑн Канаш районӗнчи инспекцийӗн аслӑ бухгалтерне.
29. Мария Сергеевна Родионовӑна — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи финанс пайӗн главнӑй бухгалтерне.
30. Абдул Сафиуллович Сафиуллина—Комсомольски районӗнчи финанс пайӗн налог агентне.
31 Николай Евдокимович Свешникова—Сӗнтӗр районӗнчи финанс пайӗн заведующине.
32. Лидия Владимировна Соколовӑна—Госбанкӑн Калининӑри уйрӑмӗн аслӑ инспекторне-группа руководительне.
33. Евстафий Семенович Сорокина — республика финанс министерствин аслӑ инспекторне.
34. Евдокия Платоновна Стрежнева—Госбанкӑн Кувакинӑри уйрӑмӗн главнӑй бухгалтерне.
35 Зинаида Николаевна Тетеринӑна—Етӗрне районӗнчи финанс пайӗн аслӑ инспекторне.
36. Анастасия Николаевна Ушаковӑна—Етӗрне районӗнчи финанс пайӗн инспекторне.
37. Прасковья Дмитриевна Халяминӑна—Сӗмӗрле районӗнчи финанс пайӗн инспекторне.
38. Мария Павловна Хорьковӑна — Госбанкӑн Шӑмӑршӑри уйрӑмӗн аслӑ инспекторне.
39. Анастасия Ивановна Черновӑна — Кувакино районӗнчи финанс пайӗн главнӑй бухгалтерне.
40. Валентина Алексеевна Шипуновӑна—Госстрахӑн Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи инспекцийӗн аслӑ бухгалтерне.
41 Аполлон Якимович Якимова — Госбанкӑн Ишлей районӗнчи Ишлей-Покровски ялӗнчи уйрӑмӗн управляющине.

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. ВОРОШИЛОВ.
СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Секретарӗ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль.
1953 çулхи ноябрӗн 4-мӗшӗ.

Электричество тата радио кӗртеççӗ

ЧУРАЧӐК. «Прогресс» ялхуçалӑх артелӗн членӗсем пуян та культурӑллӑ пурӑнаççӗ.

Иртнӗ çулта колхоз радиоузел лартрӗ. Кӑçал колхоза кӗрекен пилӗк ялтан тӑваттӑ ялне радиофикациленӗ, тепӗр ялӗнче юпасем лартса пралуксем карнӑ. Халӗ колхозниксен килӗсене радио кӗртме тытӑнчӗç. Çак уйӑхра пӗтӗм колхоза радиофикацилесе çитереççӗ.

Колхозри çиччӗ бригадӑран виçӗ бригадӑри колхозниксен килӗсене Именкассинчи ГЭС çутӑ парса тӑрать.

Ноябрӗн 15-мӗшӗнче колхоз куçса çÿрекен электростанци илсе килчӗ. Вӑл 180 лампа çутатмалӑх электроэнерги пама пултарать. Çапла вара тата икӗ бригадӑри колхозниксен килӗсене электричество кӗртме май пулать.

— Эпир электроэнерги вӑйӗпе çӑм таптармалли, авӑн çапмалли машинӑсене, армана ӗçлеттеретпӗр, фермӑри йывӑртарах ӗçсене çӑмӑллатас тӗлӗшпе те усӑ куратпӑр,—тет колхозри пуçламӑш парторганизаци секретарӗ А. Семенов юлташ.

Колхоз хӑма çурмалли рама лартать. Вӑл та çак электростанци паракан электроэнергипе ӗçлеме тытӑнать.

Ю. ПЕТРОВ.

Вӑрман хатӗрлекенсен культура ыйтӑвӗсене лайӑхрах тивӗçтермелле

Пиллӗкмӗш пилӗк çуллӑх плана ӑнӑçлӑ тултарасси ӗççыннисем хушшинче культурӑлла-массӑлла ӗçе лайӑх йӗркеленинчен сахал мар килет. Профсоюз организацийӗсен рабочисен политикӑлла тата культурӑлла шайне ÿстерме, производство новаторӗсен опытне, социализмла ӑмӑртӑва анлӑ сарма, ӗççыннисен художествӑлла пултарулӑхне вӑйлатма мӗн кирли пурте çителӗклӗ. Çавӑнта калани тӗрӗссине республикӑри тӗслӗхсенчен лайӑх курма пулать.

Республикӑри вӑрманпа хут промышленноçӗнчи рабочисен профсоюз организацийӗсен 16 клуб, 37 хӗрлӗ кӗтес, 23 библиотека пур. 1952—1953 çулсенче культура инвентарӗ, çӗнӗ кӗнекесем, тӗрлӗ оборудовани туянма рабочкомсене 250 пин тенкӗ уйӑрса панӑ. Кӑçал 33 радиоприемник, 60 хутӑнкупӑс, баян, аккордеон илнӗ. Профсоюз обкомӗ политикӑлла тата наукӑлла пӗлӳсене саракан обществӑн уйрӑмӗпе договор тунӑ. Çав договор тӑрӑх çак кварталта 50 лекци ирттермелле.

Çарӑккӑри, Саланчӑкри тата Соловьевкӑри клубсенче партин XIX-мӗш съезчӗн решенийӗсем çинчен, вӑрман промышленноçӗ халӑх хуçалӑхне аталантарас, ӗççыннисен ÿссе пыракан ыйтӑвӗсене тивӗçтерес тӗлӗшпе мӗнле пысӑк вырӑн йышӑнни çинчен лекцисемпе докладсем тӑтӑшах ирттереççӗ.

Чылай клубсенче, хӗрлӗ кӗтессенче малта пыракансен опытне сарас тӗлӗшпе вечерсем ирттереççӗ, кинокартинӑсем кӑтартаççӗ. Саланчӑкри клубра струннӑй оркестр, хор кружокӗ ӗçлет. Кӑçал Сӗмӗрлере çӗнӗ клуб уçнӑ. Унта 32 пин тенкӗлӗх культура инвентарӗ пур.

Нумай рабочисем хӑйсен пушӑ вӑхӑтне клубсемпе хӗрлӗ кӗтессенче, библиотекӑсенче ирттереççӗ, унта хаçат-журналсем вулаççӗ, художествӑлла пултарулӑх кружокӗсем лартакан спектакльсемпе концертсем кураççӗ. Уйрӑмах çамрӑксем хӑйсен пушӑ вӑхӑтне савӑнӑçлӑ ирттерме тӑрӑшаççӗ. Вӗсем художествӑлла пултарулӑх кружокӗсен ӗçне активлӑ хутшӑнаççӗ, вечерсем, вулакансен конференцийӗсем ирттереççӗ.

Çавӑн пек паха тӗслӗхсем сахал мар пулин те республикӑри вӑрман хатӗрлекенсем хушшинче культурӑлла-массӑлла ӗçе лайӑх йӗркеленӗ тесе калама май çук. Нумай рабочкомсем рабочисен культура ыйтӑвӗсене япӑх тивӗçтереççӗ. Чылай клубсемпе хӗрлӗ кӗтессенче культурӑлла канма, пӗлӳсене ÿстерме лайӑх майсем туман. Тӗслӗхрен, Сӗмӗрле районӗнчи Речной поселока илер. Вӑл вӑрманта вырнаçнӑ. Унта вӑрман хатӗрлекен рабочисем çӗршерӗн пурӑнаççӗ. Кунта виçӗ çул каярах клуб уçнӑ. Рабочкомпа дирекци рабочисен культурӑлла ыйтӑвӗсене тивӗçтерессине кирлӗ пек хакламанни пула клубра нимӗнле йӗркелӗх те пулман, ӑна хӗллехи вӑхӑтра ӗçлеме çийӗнчех юсаса тирпейлемен. Мисчӗрӗ клубра йӗркелӗх çук, таса мар, стенасем хуралса кайнӑ.

Кабановкӑри клубра кӑмакасене шуратман. Ку поселокра электростанци пур. Анчах оборудовани юсавлӑ маррине вӑл çур çул ӗнтӗ ӗçлемест. Çавӑн пирки клубра та, рабочисен хваттерӗсенче те электричество çути çук, радио ӗçлемест. Сӗмӗрле вӑрманпромхоз директорӗ Ф. Киркин, рабочком председателӗ Ф. Тимофеев юлташсем пухусемпе канашлусенче рабочисемӗн тӑрӑшни çинчен нумай калаççӗ, паха ӗçсем туса ирттерме сӑмах параççӗ, анчах уй çинчен часах манаççӗ.

Буински вӑрманпромхозри клубсемпе хӗрлӗ кӗтессенче лекцисемпе докладсем сахал ирттереççӗ. Октябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне кӑçал пурӗ те 27 лекципе доклад çеç ирттернӗ. Клубра художествӑлла пултарулӑх кружокӗсем ӗçлемеççӗ, музыка инструменчӗсемпе усӑ курмаççӗ. Клубра хӑшпӗр чухне кино кӑтартаççӗ, урӑх нимӗнле ӗçсем те туса ирттермеççӗ. Клуб заведующийӗ Н. Корчагин юлташ рабочисемпе тачӑ çыхӑну тытмасть, кружоксен ӗçне йӗркелеме тӑрӑшмасть. Рабочком председателӗ Семенов юлташ лекцисемпе докладсем вулама инженерсемпе техниксене хутшӑнтармасть, клубсемпе хӗрлӗ кӗтессенчи пысӑк çитменлӗхсемпе килӗшсе пурӑнать. Рабочком социализмла ӑмӑртӑва йӗркелес, малта пыракансен опычӗпе меслетне пӗтӗçтерсе сарас тӗлӗшпе хӑйӗн пусарулӑхне кӑтартмасть, коллектива умра тӑракан задачӑсене пурнӑçлама мобилизацилемест.

Кунта кашни вунӑ рабочирен тӑваттӑшӗ ӗç нормине тултармасть. Октябрь уйӑхӗнче малта пыракан стахановецсем Байникшин, Соколов юлташсем аслӑ уяв ячӗпе коллективра социализмла ӑмӑрту сарма сӗннӗ. Анчах рабочком вӗсен паха сӗнӗвне пурнӑçлама тивӗçлӗ мерӑсем йышӑнман. Нумай участоксенче рабочисене хаçат вуласа парас ӗçе йӗркелемен, хаçат-журналсене рабочисем патне вӑхӑтра илсе çитермеççӗ. «Лесоруб» стена хаçачӗ çур çула яхӑн тухман. Вӑрнарпромхозра чӑваш рабочисем нумай. Апла пулин те чӑвашла çырнӑ плакатсемпе лозунгсем çук.

Партбюро секретарӗ Власов юлташ рабочком ӗçне сахал тӗрӗслет, унти çитменлӗхсене пӗтерме, рабочком председателӗн Семенов юлташӑн ответлӑхне ÿстерме кирлӗ пек тӑрӑшмасть. Буински вӑрманпромхоз производство планне тултарас тӗлӗшпе чылайранах юлса пырать. Çакӑ вӑл рабочком пуçарусӑр ӗçленинчен, рабочисен культурӑлла ыйтӑвӗсене япӑх тивӗçтернинчен, социализмла ӑмӑртӑва анлӑ сарманнинчен нумай килет.

СССР Министрӗсен Совечӗпе БПСС Центральнӑй Комитечӗ вӑрман хатӗрлекен промышленность юлса пынине пӗтерес тӗлӗшпе решени йышӑнчӗç. Партипе правительство вӑрманпромхозсене хӑватлӑ техникӑпа тата ытларах хӗçпӑшаллантарма, рабочисем валли тухӑçлӑ ӗçлеме, культурӑлла канма паха майсем туса пама палӑртнӑ. Çак кварталта «Чувашлес» трест енӗпе çеç рабочисем валли 3.000 тӑваткал метр пурӑнмалли çуртсем лартмалла. Улатӑрта механизаторсем вӗрентсе хатӗрлеме училище уçаççӗ.

Рабочкомсен, агитаторсемпе пропагандистсен, клуб работникӗсен рабочисене асӑннӑ решени çинчен тӗплӗн ӑнлантарса памалла, вӑрманпромхозсем юлса пынине пӗтерме мобилизацилемелле. Клубсемпе хӗрлӗ кӗтессенче, общежитисенче рабочисене çитӗнӳсем тума хавхалантаракан плакатсемпе лозунгсем пулччӑр. Рабочкомсен, профгруппоргсен кашни рабочие социализмла ӑмӑртӑва хутшӑнма, техникӑна вӗренме пулӑшмалла. Малта пыракансен опычӗпе меслечӗ кашни рабочин тивлечӗ пултӑр.

Çак кварталта тата 1954 çулхи пӗрремӗш кварталта вӑрман хатӗрлевне колхозниксем çӗршерӗн хутшӑнаççӗ. Иртнӗ çулсенче хӑшпӗр рабочкомсем колхозниксен культурӑлла ыйтӑвӗсене тивӗçтерессинчен пӑрӑнса тӑнӑ, çак ӗçе районсенчен уйӑрса яракан агитаторсемпе пропагандистсем тӑвасса шанса пурӑннӑ. Ку вӑл пачах тӗрӗс мар, çавӑн пек сиенлӗ йӑлана пӗтермелле. Вӑрманпромхоза вӑхӑтлӑха ӗçлеме пынӑ колхозника тулли кӑмӑлпа кӗтсе илмелле, ӑна тухӑçлӑ ӗçлеме, культурӑлла канма паха майсем туса памалла. Колхозниксем пурӑнакан общежитисенче хӗрлӗ кӗтессем, радио, хаçат-журналсем пулччӑр. Кашни бригадӑра агитатор пултӑр, рабочисем хаçатсенчи хыпарсене çийӗнчех пӗлсе тӑччӑр, клубсемпе хӗрлӗ кӗтессене çÿреме пултарччӑр. Уйрӑмах çӗнӗ рабочисене техникӑна вӗрентесси, малта пыракансен опычӗпе паллаштарасси çине тимлӗ пӑхни кирлӗ.

Хӑшпӗр çӗрте колхозниксенчен уйрӑм бригадӑсем организацилеççӗ. Çапла туни тӗрӗс мар. Вӗсене яланхи рабочисемпе пӗрле ӗçлеттермелле. Вара вӗсем ӗçе хӑвӑртрах хӑнӑхса çитме, техникӑна çӑмӑлрах вӗренме, стахановецсен меслечӗсемпе паллашма пултараççӗ. Рабочисен бригадисенче опытлӑ бригадирсемпе агитаторсем пур.

Уйрӑмах библиотекӑсен ӗçне йӗркелесси çинче чарӑнса тӑрас пулать. Вӑрман хатӗрлекенсем тӗрлӗ вырӑнта ӗçлеççӗ тата пурӑнаççӗ. Хӑшпӗр çӗрте хӗрлӗ кӗтессем, библиотекӑсем çук. Çавӑнпа рабочкомсен куçса çÿрекен библиотекӑсем ытларах организацилеме тӑрӑшмалла. Кашни çӗнӗ кӗнеке, журнал библиотекӑсенче кӑна ан выртчӑр, вӗсене рабочисем çийӗнчех вулама пултарччӑр. Куçса çÿрекен библиотекӑсем участоксене, общежитисене хӑçан пырассине рабочисене малтанах пӗлтерсе хумалла, вӗсене çирӗплетнӗ график тӑрӑх çÿреттермелле.

Рабочисем пурӑнакан поселоксенче кӗнеке сутас ӗçе йӗркелемен. РСФСР Вӑрман тата хут промышленность министерствин Чӑваш республикинчи УРС-ӗн (начальникӗ Никандров юлташ) çак çитменлӗхе пӗтермелле. Рабочи хӑйне кӑмӑла каякан кӗнекене кирек хӑçан та туянма пултартӑр.

СССР Министрӗсен Совечӗпе БПСС Центральнӑй Комитечӗ çÿлерех асӑннӑ решенире вӑрман хатӗрлекенсем хушшинче культурӑлла-массӑлла ӗçе вӑйлатмалли мерӑсене те палӑртнӑ. Çав решенипе килӗштерсе, вӑрманпромхозсенчи организацисем хӑйсен киноустановкисене Культура министерствин органӗсене, радиоузелсене—çыхӑну органӗсене пачӗç. Чӑваш АССР Культура министерствин йывӑç хатӗрлекенсене пур çӗрте те кино уйӑхра 3—4 хутран кая мар кӑтартмалла. Çыхӑну управленийӗн общежитисене, рабочисен хваттерӗсене радио кӗртес тӗлӗшпе тӑтӑклӑ мерӑсем йышӑнмалла, радиопитани çителӗклӗ кӳрсе килмелле.

Вӑрман пунктӗнче тата мастер участокӗнче 75 çынтан кая мар ӗçлет пулсан, унта хӗрлӗ кӗтес пулмалла. Çакна пурнӑçлас тесен, вӑрманпромхоз руководителӗсен хӗрлӗ кӗтессем валли çӗнӗ çуртсем е пӳлӗмсем уйӑрса памалла, хӗрлӗ кӗтессен çурчӗсемпе тӗрӗс мар усӑ кураççӗ пулсан, вӗсене пуштармалла.

Вӑрманти клубсене спектакльсемпе концертсем лартса пама хуласенчен тата район центрӗсенчен артистсемпе художествӑлла пултарулӑх кружокӗсем пыма кӑмӑл тӑваççӗ, анчах автомашинӑсем уйӑрса паманнипе ӑна час-часах пурнӑçлаймаççӗ. Малашне çак çитменлӗхе пӗтермелле. Лекторсене, искусство работникӗсене лайӑх кӗтсе илмелле тата [illegible]малла, вӗсемпе рабочисем хушшинчи туслӑха çирӗплетмелле.

Вӑрман промышленноçӗнче ӗçлекен работниксен активӗн республикӑри пухӑвӗнче вӑрманпа хут промышленноçӗнчи рабочисен профсоюз обкомӗ культурӑлла-массӑлла ӗçе, социализмла ӑмӑртӑва çителӗксӗр ертсе пынине палӑртрӗç. Профсоюз обкомӗ çакӑнтан тивӗçлӗ вывод турӗ. Культурӑлла-массӑлла ӗçе тата ӑмӑртӑва вӑйлатас тесе, обком вӑрманпромхозсене хӑйӗн работникӗсене ячӗ, клубсемпе хӗрлӗ кӗтессен ӗçне тӗрӗслерӗ, чылай çитменлӗхсене пӗтерчӗ. Анчах çакӑ вӑл пысӑк ӗçӗн пуçламӑшӗ кӑна.

Культурӑлла-массӑлла ӗçе вӑрман промышленноçӗ юлса пынине хӑвӑртрах пӗтерес, государство планӗсене ӑнӑçлӑ тултарас тӗллеве пӑхӑнтарса туса пырас пулать.

П. ИЛЬИН,
Чӑваш республикинчи вӑрманпа хут промышленноçӗнчи рабочисен профсоюз обкомӗн председателӗ.

Колхозсенчи тупӑшсене тӗрӗс валеҫер

Ялхуҫалӑх ҫулӗ вӗҫленчӗ. Республикӑри колхозсем 1953 ҫулта малалла ҫӗнӗ утӑм турӗҫ. Умра отчетлӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ: 1953 ҫулхи ӗҫсен итогне тумалла тата тупӑшсене тӗрӗс валеҫмелле.

Ялхуҫалӑх артелӗн Уставӗ тупӑшсене мӗнле валеҫмеллине тӗплӗн кӑтартса парать. Колхоз хӑй туса илнӗ тырпулпа выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсенчен пуринчен малтан государство умӗнчи хӑйӗн обязательствисене пурнӑҫлать, производствӑлла фондсем хывать, продукцин пӗр пайне государствӑна е колхоз пасарӗнче сутма палӑртать. Ытти пӗтӗм тырпулпа выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх колхозниксене валеҫсе парать.

Ҫавӑн пекех, артель укҫан илекен тупӑшран чи малтан государство умӗнчи парӑмсене тӳлесе татать. Ун хыҫҫӑн производство, культура, администраци ӗҫӗсем валли, пайланман фондсене ӳстерме укҫа-тенкӗ уйӑрса хурать. Укҫан илнӗ ытти пӗтӗм тупӑша колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫсе парать.

КПСС XIX-мӗш съезӗнче Центральнӑй Комитетӑн ӗҫӗсем ҫинчен тунӑ отчетлӑ докладра Г. М. Маленков юлташ ҫапла каланӑ: «Колхозсенче тупӑшсене прогрессивлӑрах йӗркепе валеҫме тытӑнмалла, артель членӗсем хушшинче тупӑшсене бригада, звено е уйрӑм колхозник мӗн чухлӗ ялхуҫалӑх продукцийӗ туса илнине кура колхозника ҫырса панӑ ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫмелле. Ҫакӑ колхозниксен ӗҫ тухӑҫлӑхне чылай ӳстерме, уравниловкӑна пӗтӗмпех пӗтерме, ӗҫкунӗсен хакне малалла ӳстерсе пыма май парать».

Тупӑшсене валеҫнӗ чухне Партипе Правительство кӑтартса панисене тата ялхуҫалӑх артелӗн Уставӗнче каланисене тӗп вырӑна хумалла.

Иртнӗ ҫул тупӑшсене валеҫнӗ чухне йӑнӑшсем тунине палӑртнӑ. Чылай колхозсенче производствӑлла фондсене кирлӗ чухлӗ хывса хӑварман, пайланман фондсене ҫултан-ҫул ӳстерсе пыма кирли ҫине тимлӗн пӑхман.

Кӑҫал та республикӑри нумай колхозсенче туса илнӗ ялхуҫалӑх тата выльӑх-чӗрлӗх продукцийӗпе тӗрӗс усӑ курмалла тӑвас тӗлӗшпе кирлӗ мерӑсем йышӑнмани палӑрать. Тӗслӗхрен, Шӑхасан районӗнчи «Знамя» колхоз 1953 ҫулта, натуроплата планне тултариччен тата вӑрлӑх фончӗ хывиччен 40 тонна ҫӗрулми сутнӑ. Ҫавӑн пекех колхоз пурлӑхӗпе укҫи-тенкине производство планӗсенче пӑхса хуман ӗҫсене тума салатса пӗтерни те палӑрать. Вӑрнар, Куславкка, Калинино районӗсенчи нумай колхозсенче, хӑйсен ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ пулнӑ ҫӗртенех, ӗҫ вӑйӗ тара тытса укҫа-тенкӗ тата тырпул вырӑнсӑр нумай салатса пӗтернӗ. Ҫавсене пула колхозсен тупӑшӗсем чылай чакаҫҫӗ. Нумай колхозсенче ӗҫкунӗсене администраци ӗҫӗсене тума ытлашши нумай расходлаҫҫӗ. Тӗрлӗ ӗҫ хатӗрӗсене кашни колхозрах колхозниксен вӑйӗпе тума май пулать. Ҫав вӑхӑтрах чылай колхозсенче ҫак ӗҫ хатӗрӗсене сутӑн илсе укҫа-тенке нумай расходлаҫҫӗ.

1953 ҫулта туса илнӗ тупӑшсене валеҫнӗ чухне асӑннӑ тата ытти йӑнӑшсемпе ҫитменлӗхсене татӑклӑн пӗтерес пулать.

Тупӑшсене тӗрӗс валеҫес тесен, ку ӗҫе малтанах пур енчен те тӗплӗн хатӗрленни кирлӗ. Чи малтан учет ӗҫӗнче ҫирӗп йӗрке туса хурас пулать. Колхоз туса илнӗ продукцие пурне те шута илнӗ-и? Кӑна тӗрӗслесе тухас пулать. Ҫавӑн пек тӑвас тесен, продукцие прихода кӗртнӗ тата расходланӑ документсемпе тата продукци мӗн чухлӗ юлнипе танлаштарса пӑхмалла.

Кашни бригада, звено, колхозник тунӑ ӗҫкунӗсене тӗрӗс шута илни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫавӑнпа та ӗҫкунӗсене тӗрӗс расходланине тӗплӗн тӗрӗслесе тухмалла. Ӗҫкунӗсене планпа мӗн чухлӗ расходлама палӑртнӑ тата чӑннипе мӗн чухлӗ пӗтернӗ? Колхозниксен ӗҫ кӗнекисем ҫине ӗҫкунӗсене тӗрӗс ҫырса пынӑ-и? Ҫаксене пурне те тӗрӗслесе тухмалла.

СССР Министрӗсен Совечӗ 1948 ҫулхи апрелӗн 19-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленире ялхуҫалӑх культурисемпе выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне кура бригадӑсене, звеносене, колхоз председательне, бригадирсене, фермӑсен заведующийӗсене, ҫавӑн пекех колхозниксене ӗҫкунӗсем хушса парасси е чакарасси ҫинчен каланӑ. Ҫак йӗркене колхозра мӗнле пурнӑҫласа пыраҫҫӗ? Ҫакна та тӗрӗслесе тухмалла.

Ӗҫкунӗсене тӗрӗс шутласа хунине тӗрӗсленӗ чухне СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ 1953 ҫулхи сентябрӗн 21-мӗшӗнче «Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе малалла аталантармалли мерӑсем ҫинчен» йышӑннӑ постановленире выльӑхсен хисепне ӳстермелли плана тултарнӑшӑн фермӑсен заведующийӗсене, колхоз председательне унӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен заместительне ӗҫкунӗсем хушса парасси ҫинчен каланине мӗнле пурнӑҫлани ҫине тимлӗн пӑхмалла. Ҫавӑн пекех колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗ колхозниксене выльӑх-чӗрлӗх тата унӑн продукцине сутса тунӑ тупӑшран колхозниксене кашни кварталта аванс шучӗпе укҫа-тенкӗ парса тӑрасси ҫинчен йышӑннӑ постановление мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗслесе тухмалла.

Ҫакӑн пек тӗплӗн тӗрӗслесе тухни ӗҫкунӗсем тӑрӑх мӗн чухлӗ продукци тата мӗнҫе ӗҫкунӗ тӑрӑх валеҫсе памаллине тӗплӗн палӑртма май парать.

Тупӑшсем валеҫнӗ чухне пуринчен ытла колхозӑн обществӑлла хуҫалӑхне малалла тӗреклетес ыйтусем ҫине тимлӗн пӑхмалла. Ҫакна май пайланман фонда ӳстерсе пырасси уйрӑмах пысӑк ыйту пулса тӑрать. Ялхуҫалӑх органӗсем тата ялхуҫалӑх банкӗн уйрӑмӗсем кирлӗ пек тӗрӗслесе тӑман пирки чылай колхозсем иртнӗ ҫулсенче пайланман фонда хывма палӑртнӑ укҫа-тенкӗне хывман. Пайланман фондри пурлӑха вырӑнсӑр салатса пӗтернисем те пулнӑ.

СССР Министрӗсен Совечӗ 1952 ҫулхи февралӗн 16-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленире, колхозсенче строительство ӗҫӗсем вӑйланса пынине шута илсе, колхоз укҫан илекен тупӑшран пайланман фонда 15—20 процент чухлӗ уйӑрса хума кирлине кӑтартса панӑ. Колхоз правленийӗсен, тупӑшсене валеҫнӗ чухне иртнӗ ҫулсенче пайланман фонда хывса ҫитерейменукҫа-тенке пӗтӗмпех хывса ҫитерме кирлӗ мерӑсем йышӑнмалла. Ҫакна асра тытас пулать: пайланман фонд вӑл колхозсен обществӑлла хуҫалӑхне ӳстермелли тата тӗреклетмелли ҫӑлкуҫӗ пулса тӑрать. Пайланман фонда ҫултан-ҫул ӳстерсе пымалла.

Хӑшпӗр колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫрен илнӗ тупӑшсене тӗрӗс мар валеҫҫине шута илсе, СССР Министрӗсен Совечӗ колхозсене выльӑх-чӗрлӗх тата вӗсен продукцине сутса илнӗ тупӑша ҫакӑн пек йӗркепе валеҫме сӗнчӗ:

Колхоз мӗнле те пулса продуктивлӑ выльӑх-чӗрлӗх енӗпе выльӑхсен йышне ӳстермелли плана тултараймасан пулсан, выльӑх сутса е выльӑх пусса илнӗ тупӑша пайланман фонда мӗнпур продуктивлӑ выльӑх енӗпе выльӑхсен йышне ӳстерме кирлӗ чухлӗ хывмалла. Ытти тупӑша ялхуҫалӑх артель Уставӗн 12-мӗш статьи кӑтартнӑ пек ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫмелли тупӑшсен шутне кӗртмелле.

Планран ирттерсе ӗрчетнӗ продуктивлӑ выльӑх-чӗрлӗх сутса илнӗ тупӑша, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пур выльӑхсем енӗпе те тултарнӑ пулсан, пӗтӗмпех колхоз тупӑшне кӗртмелле, ӑна вара, ялхуҫалӑх артель Уставӗн 12-мӗш статьи кӑтартса панӑ пек, ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫмелле.

Ҫӗнӗ хуҫалӑх ҫулӗн пуҫламӑшӗнче колхозсен обществӑлла хуҫалӑхӗн ыйтӑвӗсене укҫа-тенкӗ енӗпе тивӗҫтермелле тӑвас тата колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх укҫа-тенкӗ валеҫсе парас ӗҫе йӗркелесе ҫитерес тӗлӗшпе ӗҫкунӗсем тӑрӑх колхозниксене укҫа-тенкӗ валеҫсе панӑ чухне ҫапла тума сӗннӗ:

Колхозӑн приходпа расход сметинче палӑртнӑ тӑрӑх илнӗ, анчах ҫулталӑк вӗҫне расходласа пӗтермесӗр юлнӑ материалсен, вӑрлӑхсен, фураж тата ытти вак инвентарь хакне тупӑш шутӗнчен кӑлармалла;

колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗ йышӑннӑ тӑрӑх ҫулталӑк хушшинче расходлама палӑртнӑ укҫа-тенкӗрен ҫӗнӗ ялхуҫалӑх ҫулӗнче расходлама 1 процентран пуҫласа, анчах та 5 процентран ытла мар, уйӑрса памалла.

Ялхуҫалӑх ҫулӗн итогне палӑртасси тата тупӑшсене валеҫесси хуҫалӑхла тата политикӑлла пысӑк ӗҫ. Вӑл мӗнпур колхозниксен интересӗсене пырса тивет. Ҫавӑнпа та ҫак ӗҫе пӗтӗм колхозниксем хутшӑннипе ирттермелле.

Тупӑшсене тӗрӗс валеҫни колхозсене организаципе хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен малалла тӗреклетсе пыма, колхозниксен пурнӑҫне лайӑхлатма пулӑшать.

И. КОСМИНСКИЙ.

Ҫулсем яланах юсавлӑ

Канаш дистанцийӗн ҫул-йӗр обходчикӗ Николай Алексеев килӗнчен тухрӗ. Ун ултӑ сехетре смена йышӑнмалла. Николай Канаш районӗнчи Кармамей ялӗнче пурӑнать. Ҫавӑнпа та унӑн смена йышӑниччӗпех хӑйӗн участокӗнчи ҫул тӑрӑх темиҫе километр утма тивет.

Акӑ, табельнӑйра ҫутӑ курӑнчӗ. Ун умӗн дежурствӑра пулнӑ Илья Федотов тӗрлӗ инструментсене хума та ӗлкӗреймерӗччӗ, Николай Алексеев смена йышӑнма пырса та ҫитрӗ.

— Ну, Илле, мӗн ҫӗнни пур? Дежурство ӑнӑҫлӑ иртрӗ-и?

— Пурте лайӑхах. Инструментсене йышӑнма пултаратӑн.

Ирхине ҫич ултӑ сехетре Николай Алексеев хурала тухрӗ. Вӑл—хурҫӑ ҫулсен часовойӗ.

Николай Алексеев чугун ҫул транспорчӗнче 1943 ҫулта ӗҫлеме пуҫланӑ. Малтан юсав ӗҫӗнчи рабочи пулнӑ, 1949 ҫулта вара ӑна ҫул-йӗр обходчикне куҫарнӑ. Хӑйне шанса панӑ ӗҫе Алексеев юлташ чыслӑн туса пырать. Вӑл поездсене ванасран та сахал мар ҫӑлса хӑварнӑ. Февраль уйӑхӗнче, сӑмахран, акӑ мӗн пулса иртнӗ. Алексеев дежурство йышӑннӑ та ҫула тӗрӗслеме тухнӑ. 664-мӗш километрта рельссенчен пӗрне шаккаса пӑхнӑ хыҫҫӑн темле урӑхла сасӑпа янрани илтӗнсе кайнӑ. Рельс ҫурӑлса кайнӑ-ши вара, шухӑшласа илнӗ вӑл. Чӑн та, хунарпа ҫутатнӑ хыҫҫӑн, рельс ҫурӑлни курӑннӑ.

Мӗн тумалла? Кӗҫех тата 72-мӗш поезд килмелле. Ним тӑхтаса тӑмасӑрах, Алексеев сигнал парать. Часах ҫул юсакансен бригади килсе ҫитет, ҫула юсама тытӑнать. Сула юсиччен поезда чарӑнса тӑма Алексеев паллӑ парать. Ҫирӗм минутран ҫурӑлнӑ рельс вырӑнне юсавлине вырнаҫтарса лартаҫҫӗ...

Николай Алексеев ӗҫӗнчи ҫакӑн пек пархатарлӑ тӗслӗхсене татах та илсе кӑтартма пулать. Вӑл хӑйӗн мӗнпур пӗлӗвне, вӑйне халӑхпа Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн парать.

Ҫул-йӗр обходчикӗн ҫемйи савӑнӑҫлӑ та тулӑх пурнӑҫпа пурӑнать. Пӗр икӗ уйӑх каялла унӑн ҫемйи ҫӗнӗ пӳрте пурӑнма куҫрӗ, ӑна перекетленӗ укҫапа туса лартнӑ.

Николай Алексеев хӑйӗн техникӑлла пӗлӗвӗсене ӳстерессии ҫинчен те манмасть. Вӑл кашни эрнерех пӗр кун техникӑлла вӗренӳ кружок занятийӗсене ҫӳрет.

...Хурҫӑ рельссем тӑрӑх поездсем умлӑн-хыҫлӑн ҫӳреҫҫӗ. Чугун ҫул хӗрринче сарӑ ялав йӑтса ҫул-йӗр обходчикӗ Николай Алексеев тӑрать. Вӑл состав мӗнле пынине, мӗнле те пулин кӑлтӑк пуррипе ҫуккине тимлӗн асӑрхать. Поездсен машинисчӗсем ҫул юсавлине шанса тӑма пултараҫҫӗ, мӗншӗн тесен чугун ҫул ҫинче Алексеев юлташ пек хастарлӑ та пултаруллӑ ҫынсем ӗҫлеҫҫӗ.

М. УТКИН.

Пӗр ҫемьерен тӑватӑ офицер

ТАВАП. Совет влаҫӗ пулнӑранпа пысӑк Тушкил ялӗ тӗпренех ҫӗнелчӗ. Кунти ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкултан кашни ҫулах вуншар ҫамрӑк вӗренсе тухать. Вӗсем чылайӑшӗ ӑслӑ шкулсене вӗренме каяҫҫӗ.

Ялти Александр Миронов ҫемйинче тӑватӑ офицер. Александр Миронов хӑй граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче батальон командирӗ пулнӑ. Унӑн аслӑ ывӑлӗ—Николай Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче лейтенант пулнӑ, халӗ ялти шкулта учитель пулса ӗҫлет. Вӑталӑх ывӑлӗ—Алексей фельдшерсен шкулне пӗтернӗ, халӗ Совет Ҫарӗнче. Вӑл медицина службин лейтенанчӗ. Кӗҫӗнни—Евстахий те ҫарта, вӑл та офицер.

О. САВАНДЕЕВА.

Районти культура ҫуртӗнче

Ҫак кунсенче Шупашкарти филармони артисчӗсем—юрӑпа ташӑ ансамблӗ, симфониллӗ оркестр коллективӗсем Кӳкеҫри Культура ҫуртӗнче концерт пачӗҫ. Билетсене малтанах сутса пӗтернӗ.

— Вырӑссен аслӑ композиторӗ Петр Ильич Чайковскине асӑнса йӗркеленӗ концерта пуҫлатпӑр,— пӗлтерет филармони директорӗ Фастовский юлташ.

Унтан Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Сталинла премин лауреачӗ Ф. М. Лукин композитор П. И. Чайковский пурнӑҫӗпе творчестви ҫинчен каласа пачӗ.

— Вырӑссен аслӑ композиторӗ Петр Ильич Чайковский хӑйӗн пӗтӗм пурнӑҫне Тӑван халӑхӑн музыкӑлла культурине аталантарассишӗн панӑ,— тет Ф. М. Лукин юлташ.— Вӑл генилле композитор ҫеҫ мар, ҫав тери ӑста пианист, дирижер, музыкӑлла фельетонист, критик тата педагог-теоретик пулнӑ. Унӑн пӗтӗм творчестви, вилӗмсӗр произведенийӗсем пурнӑҫпа, халӑхпа, ӗҫпе ҫыхӑнса тӑнӑ. П. И. Чайковский хӑйӗн пурнӑҫӗнче темиҫе опера, фортепианӑпа, сӗрмекупӑспа каламалли концертсем ытти нумай тӗрлӗ произведенисем ҫырнӑ. Вӑл ҫырнӑ «Евгений Онегин», «Пиковая дама», «Чародейка» тата ытти оперӑсем вырӑссен музыкӑлла культурин ылтӑн фондне кӗрсе юлнӑ.

Октябрьти Социализмла Аслӑ революци хыҫҫӑн унӑн произведенийӗсем чӑннипех те халӑхшӑн, пӗтӗм халӑх искусстви пулса тӑчӗҫ. Генилле музыкантӑн вилӗмсӗр произведенийӗсем халӑх хушшине, вӑл шутра чӑвашсем хушшине те анлӑн сарӑлчӗҫ. Халӗ пирӗн республикӑри колхозлӑ ялсенчи сцена ҫинче те П. И. Чайковский ҫырнӑ произведенисем хӑватлӑн янӑраҫҫӗ.

Ҫав вӑхӑтра чаршав уҫӑлать. Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ В. Ходяшев ертсе пынипе симфониллӗ оркестр «Евгений Онегин» оперӑн малтанхи сыпӑкне ӑста выляса парать.

Сцена ҫинче юрӑпа ташӑ ансамблӗ.

— «Евгений Онегин» оперӑри хресченсен юрри,— пӗлтерет конферансье.

Хорпа пӗрле симфониллӗ оркестр вылять. Солистсем—Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артисчӗ Петр Медников тата Анна Клюшникова—пӗччен юрламалли юрӑсене юрлаҫҫӗ. Зал вӗсене алӑ ҫупса саламлать.

Сцена ҫине хӗрсем кӗнӗ юлаҫҫӗ. Вӗсем «Евгений Онегин» оперӑри хӗрсен юррине ҫав тери ӑста юрласа параҫҫӗ. Симфониллӗ оркестрпа ансамбльти хӗрсен юрри чуна килентерекен ҫепӗҫ кӗвӗ пулса тухать.

— Аван, питӗ лайӑх юрлаҫҫӗ,— теҫҫӗ залра ларакансем алӑ ҫупса.

Иван Калентьев солист Ленскин ариозине, Петр Кулагин солист Гремин князь арине ӑста юрласа панине те куракансем ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илеҫҫӗ.

Сцена ҫине ансамбль солисчӗ Григорий Петров тухать. Вӑл «Евгений Онегин» оперӑри Онегин арине, «Пиковая дама»

оперӑри Томский юррине пурне те кӑмӑла каймалла юрласа пачӗ.

Концертӑн иккӗмӗш пайӗ «Евгений Онегин» оперӑн юлашки пайне лартнипе пуҫланчӗ. Татьяна рольне Тамара Патрикеева, Онегин рольне Николай Петров солистсем ӑста вылярӗҫ.

Массӑллӑ сцена пуҫланать. Артистсем «Пиковая дама» оперӑри интермедие вылятса параҫҫӗ. Прилепа ролӗнче Тамара Чумакова солистка, Миловзор ролӗнче Зоя Захарова, Златогор ролӗнче Мефодий Денисов. Распорядитель—Иван Шубин солистсем вылярӗҫ. Спектакӗри массӑллӑ ташӑсене Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артисчӗ Погребной тата А. Кравцева лартма хатӗрленӗ.

— Ҫак оперӑна эпӗ темиҫе ҫул каялла Горькире курнӑччӗ. Тӑрӑшсан пирӗн республикӑри артистсем те оперӑсем выляса пама пултараҫҫӗ, начар мар выляҫҫӗ,— тет ҫумра ларакан Г. Афанасьев учитель.

Аслӑ композитор П. И. Чайковский произведенийӗсенчен йӗркеленӗ концерт вӗҫленет. Куракансем артистсене тӑвӑллӑн алӑ ҫупса саламлаҫҫӗ. Куракансен пӗр ушкӑнӗ Ф. М. Лукин композиторпа В. Ходяшева хупӑрласа илнӗ.

— Питӗ аван концерт. Артистсем лайӑх юрлаҫҫӗ, ӑста выляҫҫӗ. Малашне оперӑсен сыпӑкӗсене ҫеҫ мар, пӗтӗмпех лартса парасчӗ,— теҫҫӗ пӗрисем.

Куракансем хӑйсен шухӑш-кӑмӑлӗсене каласа, артистсене тав тӑваҫҫӗ, малашне те тӑтӑшах килсе паха концертсем пама ыйтаҫҫӗ.

Н. МИНИН.

ӲКЕРЧӖКСЕМ ҪИНЧЕ: «Евгений Онегин» оперӑра Татьяна ролӗнче Тамара Патрикеева (ҫӳлти ӳкерчӗк); «Пиковая дама» оперӑри интермедире Прилепа ролӗнче Тамара Чумакова, Миловзор ролӗнче—Зоя Захарова.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗсем.

Елчӗкри Ленин ячӗпе тӑракан колхозра

ЕЛЧӖК. Ленин ячӗпе тӑракан колхоз—нумай отраслӗ пысӑк хуҫалӑх. Вӑл ҫултан-ҫул тухӑҫлӑ тырпул, ҫӗрулми, сӳс-кантӑр, пахча ҫимӗҫ туса илет, обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе анӑҫлӑ пурнӑҫласа пырать.

Артель членӗсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ ялхуҫалӑхне малалла аталантармалли мерӑсем ҫинчен йышӑннӑ постановление пурнӑҫлассишӗн хастарлӑ кӗрешеҫҫӗ.

Колхоз обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне ирттерсе тултарчӗ. Халӗ выльӑх-чӗрлӗх фермисенче 310 пуҫ мӑйракаллӑ шултра выльӑх, 842 сысна, 687 сурӑх, 463 лаша, 3 463 пуҫ чӑх-чӗп тата 434 хур пур. Тӑхӑр уйӑх хушшинче кашни сӑвакан ӗнерен 1.060 литр сӗт суса илнӗ. Егоркинӑпа Орехова дояркӑсем хӑйсен пӑхакан кашни ӗнерен 1.120 литр сӗт суса илнӗ. Ҫулталӑк вӗҫлениччен дояркӑсем сӗт суса илмелли плана ытлашшипех тултараҫҫӗ. Колхоз выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем памалли обязательствӑна пурнӑҫланӑ.

Хӗле хатӗрленсе выльӑх витисене тӗплӗн юсанӑ, выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Кӑҫал выльӑх апачӗ хатӗрлекен бригада ҫӑвӗпех ӗҫлерӗ. Вӑл утӑ, силос, тымарҫимӗҫ, ҫӗрулми тата улӑм нумай хатӗрлерӗ.

Колхозӑн 73 семье вӗлле хурчӗ, 12 гектар ҫинче сад пахчи пур. Колхоз пахча ҫимӗҫ, сӳс-кантӑр нумай туса илет. Государствӑна 44 пин тенкӗлӗх пуса сӳсӗ панӑ. Малтан шутласа пӑхнӑ тӑрӑх, сӳс-кантӑртан 500 пин тенкӗрен кая мар тупӑш пулмалла.

Ҫак ҫулсенче правлени ҫурчӗ, клуб, автомашинӑсем валли гараж, шыв арманӗ, тимӗрҫӗ лаҫҫипе мастерской туса лартнӑ. Ҫӑм тапакан машина туяннӑ. Колхоз халӗ виҫӗ автомашина тытать.

А. МИХАЙЛОВ.

Ялти суту-илӗве вӑйлатассишӗн

Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви совет ҫыннисен куллен хи ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессине татӑклӑн лайӑхлатма палӑртнӑ пысӑк программӑна пурнӑҫласа пырса, пирӗн республикӑра пӗтӗм ҫӗршыври пекех, тавар ҫаврӑнӑшӗ татӑшах ӳсет. Кӑҫалхи виҫӗ кварталта, пӗлтӗрхи тапхӑрпа танлаштарсан, халӑха 27 процент тавар ытларах сутнӑ. Ҫӗр мамӑк пир-авӑрӗ 33 процент, пурҫӑн пир-авӑр—41 процент, тумтирпе кӗпе, сӑран атӑ-пушмак—38 процент, кӗленче савӑт-сапа—52 процент, ҫӑкӑрпа булка—54 процент, музыка инструменчӗсем 62 процент, ҫӗвӗ машинисем — 67 процент, велосипед—85 процент пӗлтӗрхинчен нумайрах сутнӑ.

Строительство материалӗсем тата производствӑра кирлӗ япаласем сутасси хӑвӑрт ӳсет. Кӑҫал, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, цемент 54 процент, пӑта—62 процент, тимӗр—икӗ хут, шифер—виҫӗ хута яхӑн, йывӑҫ материалсем—ҫичӗ хут нумайрах сутаҫҫӗ. Колхозсем двигательсем, хӑйча ҫуракан рамӑсем, автомашинӑсем, куҫса ҫӳрекен электростанцисем, трубасем т. ыт. те чылай туянаҫҫӗ.

Суту-илӗве Етӗрне, Сӗнтӗрвӑрри, Куславкка, Сӗрпӳ тата Улатӑр районӗсенче лайӑхрах йӗркеленӗ. Асӑннӑ районсенчи райпотребсоюзсем тавар ҫаврӑнӑш планне татӑшах анӑҫлӑ тултарса пыраҫҫӗ, пайщиксен ыйтӑвӗсене тулли тивӗҫтерме тӑрӑшаҫҫӗ. Тӑхӑр уйӑхра республикӑра ҫӗнӗрен магазинсемпе лавккасем 50 уҫнӑ. Халиччен тунӑ ӗҫсенчен ҫакӑ курӑнать: республикӑри потребительсен кооперацийӗ 1955 ҫул валли палӑртнӑ тавар ҫаврӑнӑш планне 1954 ҫултах тултарма пултарать.

Апла пулин те суту-илӳ организацийӗсен ӗҫсыннисен хӑвӑрт ӳсекен ыйтӑвӗсене тулли тивӗҫтереймеҫҫӗ-ха. Хӑшпӗр лавккасенче [illegible] тавар татти-сыппипсӗр сутиман те пулкалать. Ҫав таварсем Чӑвашпотребсоюзӑн тата райпотребсоюзсен базисенче кирек хӑҫан та ҫителӗклӗ. Ҫак ҫитменлӗх уйрӑмах Первомайски, Чурачӑк, Калинино, Сӗнтӗр, Советски тата Муркаш районӗсенче час-часах пулать. Паллах, ҫавӑн пек йӗркесӗрлӗхе малашне чӑтса тӑма ҫук.

Партипе правительство суту-илӳ работникӗсене халӑх ыйтӑвӗсене тата сӗнӗвӗсене тӗплӗн тӗпчесе вӗренме, вӗсен шухӑш-туйӑмӗсене шута илсе, промышленность предприятийӗсене заказсем пама, юрӑхсӑр таварсем туса кӑларассине сивлеме, предприятисем тӑратакан таварсене хытӑ тишкерсе йышӑнма хушаҫҫӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех таварсене хӑш района тата хӑш вӑхӑтра мӗн чухлӗ кирлине шута илсе кӳрсе килмелле, ытлашши запассем тумалла мар. Чылай райпотребсоюзсен руководителӗсем ҫавӑн пек тумаҫҫӗ, час-часах халӑх кӑмӑлне кайман япаласем илсе тултараҫҫӗ, базӑсене заявкӑсем вӑхӑтра памаҫҫӗ.

Нумай ялсенче кантӑрла магазинсемпе лавккасем хупӑ ларнине курма пулать. Ҫакӑ вӑл лавкка заведующийӗсем ӗҫ вӑхӑтӗнче тавар туянма кайнинчен час-часах килет. Ҫапла ан пултӑр тесен, райпотребсоюзсен склачӗсене кӳрсе килнӗ таварсене кӑларӑш, ӳкерчӗксем тата ытти паллӑсем тӑрӑх хӑвартрах уйӑрса хумалла. Ялпосемпе магазинсем панӑ заявкӑсене шута илсе, райпотребсоюзсен хӑйсен автомашинисемпе е лавӗсемпе таварсене вырӑна леҫсе памалла. Ҫапла тусан таварсем ӗҫсыннисен патне вӗсне вӑхӑтра ҫитеҫҫӗ, лавкка заведующийӗсем татти-сыппипсӗр сутма пултараҫҫӗ, тавар ҫаврӑнӑшӗ ӳсет, ӗҫсыннисем кӑмӑллӑ пулаҫҫӗ.

Ялхуҫалӑхне малалла аталантарас тӗлӗшпе йышӑннӑ постановленисенче СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ потребительсен кооперацийӗ колхозсен валли строительство материалӗсем сахал кӳрсе килнине тата ҫав материалсене сутас ӗҫе япӑх йӗркеленине палӑртнӑ. Суту-илӳ работникӗсен ҫак ҫитменлӗхе пӗтермелле. Колхозсемпе колхозниксем, ялта пурӑнакан служащисем пурӑнмалли ҫуртсем лартма пӗрене, хӑма, кирпӗч, пӑта тата ытти материалсем кашни районтах туянма пултарччӑр.

Столовӑйсемпе чайнӑйсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Ҫав ҫитменлӗхсем ӗҫсыннисене кӳрентереҫҫӗ, тухӑҫлӑ ӗҫлеме чӑрмантараҫҫӗ. Столовӑйсемпе чайнӑйсенче таса, йӗркелӗх пулмалла, халӑх ыйтӑвӗсене лайӑх тата вӑхӑтра тивӗҫтермелле.

Партипе правительство потребительсен кооперацийӗ ҫине тепӗр пысӑк задача — хуласемпе рабочисем пурӑнакан поселоксенче, колхозсемпе колхозниксенчен комиссие илсе, ялхуҫалӑх продукчӗсем сутас задача хучӗҫ. Ҫапла туни колхозсемпе колхозниксемшӗн те, суту-илӳ организацийӗсемшӗн те усӑллӑ. Республикӑри чылай колхозсем потребительсен кооперацийӗпе ҫачӑ ҫыхӑну тытаҫҫӗ, хӑйсен ытлашши продукчӗсене сутма комиссие параҫҫӗ. Кӗркунне нумай колхозсем потребительсен кооперацийӗ урлӑ Туркмен республикине сахал мар ҫӗрулми ӑсатрӗҫ. Вӑрмар районӗнчи «Маяк» колхоз (председателӗ И. Нефедов юлташ) Кавалти крахмал заводӗнче хӑйӗн ҫӗрулминчен чылай крахмал тутарнӑ. Ҫав крахмала тата ытлашши ҫӗрулмине вӑл сутма потребительсен кооперацине панӑ. Ҫӗрулмипе крахмал сутса колхоз пӗр миллион тенке яхӑн тупӑш илет.

Ҫавӑн йышши суту-илӳ—ҫӗнӗ ӗҫ. Пирӗн ӑна пур майсемпе те аталантарма тӑрӑшмалла, паха пуҫарусемпе опытсене пӗтӗмӗшле сармалла, ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтермелле. Ку ӗҫре потребительсен кооперацине хуласемпе рабочисем пурӑнакан поселоксенчи совет тата хуҫалӑх органӗсем пулӑшу пама тивӗҫ. Уйрӑмах ялхуҫалӑх продукчӗсене сыхлама тата сутма ҫуртсем уйӑрса пани кирлӗ.

Ялти суту-илӗве ҫӳлӗ шая хӑпартасси, ҫав ӗҫри культурӑна ӳстересси магазинсемпе лавккасем, складсем ҫӗнӗрен туса лартнинчен сахал мар килет. Хальхи суту-илӳ предприятийӗсенчен нумайӑшӗ кивелнӗ, культурӑлла суту-илӳ тума юрӑхсӑр. Ҫавӑнпа пирӗн типовӑй магазинсем, складсем, столовӑйсем туса лартас ӗҫе анлӑ сарас пулать. 1954 ҫулта республикӑра потребительсен кооперацийӗ енӗпе вунӑ универмаг, культура таварӗсем сутакан виҫӗ магазин, строительство материалӗсем тата производствӑра кирлӗ таварсем сутакан виҫӗ магазин, краҫҫын сутакан вунӑ лавкка туса лартма палӑртнӑ. Бунсӑр пуҫне чылай склад, краҫҫын тата ҫӗрулми хумалли хранилищӗсем, чайнӑй, ҫӗрулми типӗтекен икӗ завод, виҫӗ пекарня ҫӗнӗрен лартмалла.

Асӑннӑ предприятисене лартма укҫа-тенкӗ, оборудовани, материалсем нумай уйӑрса параҫҫӗ. Пирӗн ҫав паха майсемпе тӗрӗс, пӗлсе усӑ курмалла, ҫуртсене пурне те типовӑй проектсем тӑрӑх тумалла. Ҫӗнӗ ҫуртсем лартни киввисене юхӑнтарса ямаллине пӗлтермест. Пачах урӑхла. Ӗҫсыннисен ыйтӑвӗсене лайӑх тивӗҫтерес тӗлӗшпе пирӗн суту-илӳ предприятийӗсен мӗнпур ҫурчӗсене тирпейлӗ тытса усрамалла тата унта йӗркелӗх тумалла.

Хуҫалӑха малалла аталантарса пыма, строительствӑн пысӑк программине пурнӑҫлама укҫа-тенкӗ нумай кирлӗ. Ҫавӑнпа ялпосемпе райпотребсоюзсен, мӗнпур суту-илӳ предприятийӗсен тупӑш илмелли плана уйӑхран уйӑха тултарса пымалла, коопераци укҫи-тенкине пурлӑхне тимлӗн тыткаламалла, сметӑсене ҫирӗп пурнӑҫламалла, коопераци пурлӑхне куҫ шӑрҫине сыхланӑ пек упрамалла.

Суту-илӳ тунисӗр пуҫне потребительсен кооперацийӗ ялхуҫалӑх продукчӗсемпе чӗртавар нумай хатӗрлет. Кӑҫалхи тӑхӑр уйӑхра 20 миллион тенкӗлӗх ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрленӗ тата государство ҫирӗплетнӗ хакпа сутӑн илнӗ. Улатӑр, Пӑрачкав тата Елчӗк райпотребсоюзӗсем аш-какай, сӗт, ҫӑмарта сутӑн илмелли ҫулталӑкри плана срокчен тултарчӗҫ.

1952 ҫулхипе танлаштарсан, кӑҫал 2.640 центнер аш-какай, 5.500 центнер сӗт, 900 пин ҫӑмарта, 70 пин центнер ҫӗрулми, 15.000 центнер пахча ҫимӗҫ нумайрах сутӑн илнӗ.

Государство ҫирӗплетсе панӑ хакпа ялхуҫалӑх продукчӗсем сутнӑшӑн колхозсене 110 автомашина, нумай электрооборудовани, шифер тата ыттисене те уйӑрса панӑ. Анчах хӑшпӗр райпотребсоюзсем ялхуҫалӑх продукчӗсем сутӑн илмелли паха майсемпе кирлӗ пек усӑ курмаҫҫӗ, заданисене пурнӑҫламаҫҫӗ. Ҫак ӗҫе уйрӑмах Шупашкар, Сӗмӗрле, Сӗнтӗрвӑрри, Ишлей тата Советски районӗсенче япӑх йӗркеленӗ. Райисполкомсем райпотребсоюзсемпе ялпосен ӗҫӗпе тӗплӗнрех интересленме, вӗсене ялхуҫалӑх продукчӗсем сутӑн илме ытларах пулӑшма тивӗҫлӗ.

Умра тӑракан задачӑсене чыслӑ пурнӑҫласси кадрсенчен, вӗсем пуҫарулла пулнинчен, ӗҫе лайӑх пӗлнинчен, хӑйсен пӗлӗвӗсене татӑшах ӳстерсе пынинчен, ҫитменлӗхсене хаюллӑн критикленинчен, малта пыракансен опычӗпе меслетне анлӑ сарнинчен килет. Чӑвашпотребсоюз правленийӗ кадрсем вӗрентсе хатӗрлемелли пысӑк программа йышӑнчӗ. 1954—1956 ҫулсенче кооператив техникумӗнче товароведсем, бухгалтерсем тата плановиксем 333 ҫын, суту-илӳ тата кооператив шкулӗнче — магазин заведующийӗсем, продавецсем тата ытти работниксем 360 ҫын вӗрентсе хатӗрлемелле. 1954 ҫулта ялпосемпе райпотребсоюзсен председателӗсен, суту-илӳ пайӗсен заведующийӗсем, магазинсемпе чайнӑйсен заведующийӗсем — пурӗ 270 ҫын—хӑйсен пӗлӗвӗсене тӑрӑх курссенче ӳстереҫҫӗ. Суту-илӳ предприятийӗсенче бригадӑсем урлӑ тата уйрӑммӑн 285 ҫын вӗрентмелле.

Райпотребсоюзсемпе ялпо правленийӗсен ҫӗнӗ кадрсем вӗрентсе хатӗрлес, работниксене воспитани парас тата вӗсен ӑсталӑхне ӳстерес тӗлӗшпе тимлӗнрех ӗҫлемелле. Кооператив техникумӗнчи, суту-илӳ тата кооператив шкулӗсенчи преподавательсем студентсемпе курсантсене коммунизмла воспитани пама, культурӑллӑ работниксем вӗрентсе кӑларма тивӗҫлӗ.

Ноябрӗн 15-мӗшӗнче райпотребсоюзсемпе ялпосенче отчетсемпе суйлавсем пуҫланчӗҫ. Ҫак кампани потребительсен кооперацийӗн ӗҫне малалла лайӑхлатма, пайщиксен ыйтӑвӗсене туллинрех тивӗҫтерсе пыма ҫитменлӗхсене пӗтерме, ертсе пыракан органсене пуҫарулла ҫынсене суйлама пулӑшӗ. Анчах отчетсемпе суйлавсем хӑйсем тӗллӗн анӑҫлӑ иртесси шанса ларни пысӑк йӑнӑш пулнӑ пулӗччӗ. Райпотребсоюзсемпе ялпо правленийӗсен пайщиксен конференцийӗсемпе пухӑвӗсене идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен ҫӳлӗ пусӑмра ирттерме, унта критикӑпа самокритикӑна анлӑ сарма, кооперацин демократине пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫлама мӗн кирлине пурне те туса памалла.

Пайщиксен сӗнӗвӗсене пурне те шута илмелле тата вӗсен шухӑш-кӑмӑлӗсене ҫийӗнчех пурнӑҫлама тӑрӑшмалла.

Райпотребсоюзсемпе ялпосен правленийӗсене тата ревизи комиссийӗсене тава чӗрелле, пуҫарулла пайщиксен шанчӑкне тӳрре кӑларма пултаракан ҫынсене суйлани ялти советла суту-илӗве ҫӗнӗ, ҫӳлӗрех пусӑма хӑпартма пулӑшӗ.

Республикӑри потребительсен кооперацийӗнче ӗҫлекенсем партипе правительство лартнӑ задачӑсене чыслӑ пурнӑҫласишӗн, совет ҫыннисен ыйтӑвӗсене тулли тивӗҫтерсе пырассишӗн социализмла ӑмӑртӑва тата анлӑрах сарӗҫ.

А. БАЛАШОВ,
Чӑвашпотребсоюз правленийӗн председателӗ.

Китайра промышленность предприятийĕсем тăваççĕ

ПЕКИН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Китай Халăх Республикинчи чи пысăк предприятисенчен пĕринче — Аньшаньри металлурги комбинатĕнче çĕнĕ производство цехĕсене туса пĕтерес тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ĕç пырать. Нумаях пулмасть комбинатра Китай историйĕнче пĕрремĕш хут трубасем туса кăларма пуçланă.

«Женьминьжибао» хаçат паян пĕлтернĕ тăрăх, комбинатра чи пысăк цехсенчен пĕрне—рельсесем тăвакан цеха туса пĕтерессĕ. Хальхи вăхăтра хăватлă прокатнăй станри уйрăм узелсене тĕрĕслессĕ, тесе пĕлтерет хаçат. Узелсене тĕрĕсленин результачĕсем оборудовани лайăх выртнаçтарса лартни çинчен калаççĕ.

Хĕвелтухăç Китайри пĕрремĕш МТС

ШАНХАЙ, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Цзефаньжибао» хаçат Хĕвелтухăç Китайра Цанюсянь уездĕнче (Шаньдун провинцийĕ) пĕрремĕш машина-трактор станцийĕ ĕçleme пуçлани çинчен пĕлтернĕ. Машина-трактор станцийĕн темиçе трактор тата ытти ялхуçалăх машинисем пур. Çĕре сухалама производствăлла ялхуçалăх кооперативĕсем кăмăлласах МТС-па договорсем тăваççĕ.

Польшăра çăкăр завочĕсем тăваççĕ

ВАРШАВА, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри пичет агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Польшăри чылай хуласенче çăкăр пĕçерекен пысăк предприятисем туса пĕтерессĕ. Варшава, Щецин, Лодзь, Новая Гута хулисенче тата Силезири хуласенче механизациленĕ пекарньăсем ĕçлессĕ ĕнтĕ. Варшавăра çăкăр завочĕ иккĕ тăвассĕ. Ченстохов, Хожув, Бытом тата Польшăри ытти хуласенчи ĕççыннисем валли механизациленĕ çăкăр пĕçерекен предприятисем туса лартассĕ.

Çĕнĕ предприятисенче ятарласа хатĕрленĕ лабораторисем тăваççĕ. Вĕсенче çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнă. Çак лабораторисем çăкăрпа булка изделийĕсен пахалăхне малалла лайăхлатса пыма май параççĕ.

Моссовет ячĕпе тăракан театрăн Румынири гастролĕсем

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни правительстви чĕннипе Мускаври Моссовет ячĕпе тăракан театрăн коллективĕ Румынине пынă. Вăл Бухарестри театрсенче тата рабочисен клубĕсенче ĕççыннисене «Шторм», «Красавец-мужчина», «Отелло» тата «Забавный случай» спектакльсен кăтартнă. Совет артисчĕсем Бухарестри театрсенчи творчествăлла работниксемпе темиçе тĕлпулу ирттернĕ.

Моссовет ячĕпе тăракан театрăн гастролĕсем питех те ăнăçлă иртеççĕ. Совет артисчĕсем спектакльсем кăтартакан театрсемпе клубсен залĕсенче куракансем яланах нумай пулаççĕ.

Швецире вырăс кĕнекисен выставки уçăлнă

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Стокгольмра королевски библиотека суртĕнче вырăссен тата совет писателĕсен кĕнекисен выставки уçăлнă. Ăна королевски библиотекăпа совет посольстви организациленĕ. Выставкăна Россиăра тата Совет Союзĕнче тĕрлĕ вăхăтра вырăсла тата тĕрлĕ чĕлхепе пичетлесе кăларнă кĕнекесене тăратнă. Выставкăна çавăн пекех хаçатсем, журналсем, плакатсем, ӳкерчĕксем, литографисем тата таблицăсем тăратнă.

Паян Швецири хаçатсем выставка уçăлни çинчен отчетсем пичетлесе кăларнă. Унта вĕсем выставка уçнине ырлаççĕ, выставкăри чи интереслĕ экспонатсене хак параççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ

ВЕНА, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Венăра «Дреерпарк» суртĕнче Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ уçăлнă. Унта Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕсемсĕр пуçне тĕрлĕрен сĕртшывсенчен килнĕ йышлă хăнасем те пур.

Сесси президиумĕнче — Жолио-Кюри, Жан Лаффит, Мао Дунь, Изабелла Блюм, Эжени Коттон, Пьетро Ненни, Икуо Ояма, Вальтер Фридрих, Илья Эренбург, Николай Тихонов тата мире хӳтĕлессишĕн пыракан пĕтĕм тĕнчери юхăмăн ытти паллă деятелĕсем. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн председателĕ Жолио Кюри профессор Австрири миршĕн тăракансен председательне Брандвейнера сăмах панă. Брандвейнер сесси участникĕсене Австрири мире юратакан прогрессивлă çынсен ячĕпе саламланă.

Унтан Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн председателĕ Фредерик Жолио-Кюри пысăк сăмах тухса каланă.

Жолио-Кюри тухса каланă хыççăн, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн секретарĕ Жан Лаффит Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Бюровĕ ячĕпе сессин кун йĕрки çинчен тата комиссисем тăвасси çинчен сĕнӳ панă.

Сесси çавăн пек кун йĕрки йышăннă:

1. Тĕнчери тавлашуллă ыйтусемпе хирĕçӳсене килĕшӳсем тунипе татса парас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем (Корейăпа Германи ыйтăвне татса парасси, водородлă бомбăпа, халăха йышлăн вĕлермелли ытти хĕçпăшалсемпе усă курма чарасси, хĕçпăшалсене чакарасси тата ыттисем те). Вăл килĕшӳсем пуриншĕн те юрăхлă пулмалла.

2. Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери тĕлпулу ирттерме сĕнесси çинчен.

Сесси виçĕ комисси тума решени йышăннă:

Политикăлла комисси. Вăл кун йĕркинчи пĕрремĕш пунктпа сыхăнса тăракан сĕнӳсене сӳтсе явать. Организациллĕ комисси. Вăл кун йĕркинчи иккĕмĕш пунктпа сыхăнса тăракан сĕнӳсене сӳтсе явать. Культура ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен комисси. Вăл Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ 1954 çулта культура енĕпе туса ирттерме палăртнă тĕрлĕрен ĕçсене пăхса тухать.

Ливире çар базисем тăваççĕ

КАИР, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Аль-Бахира» хаçат çапла пĕлтерет: США-па Ливи хушшинче Ливи территорийĕ çинче çар базисем тăвасси çинчен тунă килĕшӳ тăрăх (вăл килĕшĕве пичетлесе кăларман), Америка çарĕсем Барка облаçĕнчи Аль-Фатаех районне оккупациленĕ. Вĕсем çав районта бомбăсем пăрахакан авиаци валли аэродром тума пуçланă.

Ливири хресченсене хăйсен çĕрĕсем çинчен хăваласа яраççĕ. Çав çĕрсем çинче атомлă бомбардировщиксене вĕçсе хăпармалли çулсем тăваççĕ.

Хьюлетт Джонсон „Йоркшир пост“ хаçата янă çыру

ПЕКИН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Берлинран çапла пĕлтерет:

Кентербери соборĕн настоятелĕ Хьюлетт Джонсон доктор ноябрĕн 18-мĕшĕнче Англири «Йоркшир пост» хаçата çыру янă. Унта вăл Пĕрлешӳллĕ Штатсем бактериллĕ вăрçă вăрçни çинчен хăйĕн шухăшне тепĕр хут çирĕплетсе панă. Çырура çапла каланă:

Ман пирки усал сăмахсем каличчен, эсир хăшпĕр документсене те пулин вуласа тухнă пулсан, тĕрĕсрех пулнă пулĕччĕ. Çак документсем чăнах та бактериллĕ вăрçă пулни çинчен калаççĕ. Анчах манăн хăшпĕр кĕске сведенисем илсе кăтартма тивет. Çав сведенисем мана чăнахах та бактериллĕ вăрçă вăрçнă тесе ĕнентерессĕ. Вăл сведенисем çаксем:

1) Сурçĕр-Хĕвелтухăç Китайра пулса иртнĕ ĕçсене эпĕ хам вырăнта тĕпчесе сăнани. Эпĕ çак районсенчи вырăна пăхса тухнă çынсенчен ыйтса пĕлнĕ. Çынсем кăтартса пани тĕрĕс пулнипе-пулманнине çирĕплетсе парас тесе, эпĕ çавăн пекех темиçе çынтан ыйтса пĕлтĕм. Ыйтса пĕлнĕ çак çынсем хурт-кăпшанкăсем йышлăн выртнине курнă е вĕсене хăйсем тĕп тунă, е вĕсене пĕтерме ятарласа тунă санитари отрячĕсене чĕннĕ.

2) Пекинри тата Мукденри научнăй выставкăсене тăратнă материал. Выставкăсенче бактериллĕ вăрçă çинчен çирĕплетсе калакан япаласем нумай пухнă.

3) Эпĕ паллă бактериологсемпе, ученăйсемпе тата врачсемпе калаçни. Вĕсенчен нумайăшĕ тĕнчипе паллă çынсем пулса тăраççĕ. Вĕсем çирĕплетсе калакан фактсем нумай илсе кăтартрĕç.

4) Америкăн тыткăна лекнĕ икĕ летчикĕ Куин тата Инок сăмахпа калани тата çырса панисем.

5) Бактерисене хăйсен куçĕпе курнă Китайри христианла священниксен докладĕ. Вăл доклада мĕнпур йышши тĕн тытакан 410 христианла деятель çирĕплетсе панă. Вĕсен шутне акăлчан чиркĕвĕн виçĕ епископĕ тата католикла чиркĕвĕн епископĕсем кĕреççĕ.

6) Уилферд Барчетт господин каласа пани. Вăл çӳлте асăннă летчиксемпе калаçнă кăна мар (Барчетт летчиксем ирĕклĕн те тĕрĕс калаççине çирĕплетсе панă), бактерисем пăрахнине хăй те курнă.

7) Мĕнпур паразитсемпе хурт-кăпшанкăсене пĕтерес, гигиена ĕçĕсене пурнăçа кĕртес тата ĕççыннисене май килнĕ таран ытларах прививкăсем тăвас тĕлĕшпе Сурçĕр-Хĕвелтухăç Китайра йышăннă тимлĕ те тĕрĕс тата пысăк мерăсем. Çак ĕçсем валли кăна, тен, темиçе миллион тĕнкĕ укçа пĕтнĕ пулмалла. Вăл укçа Китая аталантарас ĕçре ытти вырăнсенче питех те кирлĕ пулнă.

8) Юлашкинчен, киле таврăннă хыççăн эпĕ тĕпчесе вĕреннĕ çак документсем: а) Ив Фарж тата Клод Руа господинсем бактериллĕ хĕçпăшал çинчен тунă доклад; б) юристсен Пĕтĕм тĕнчери ассоциацийĕн Комиссийĕн докладĕ. Вăл ассоциацие Австрири пĕтĕм тĕнчери правăпа канонически правăн профессорĕ Брандвейнер доктор ертсе пынă; в) Пĕтĕм тĕнчери научнăй комиссин докладĕ. Çак комиссин членĕсем çӳлте асăннă летчиксемпе, çавăн пекех тепĕр икĕ летчикпа—Ф. Б. О'Нил лейтенантпа тата Поль Нисс лейтенантпа хăйсем калаçнă. Çак докладсенче, уйрăммăн илсен, юлашки докладра, ĕçсене фактсем енчен тата наука енчен çирĕплетсе панисем нумай. Би Би Си (Англири радиовещани.—Ред.) тата Англири хаçатсем, вăл шутра сирĕн хаçат та, çак докладсем çинчен нимĕн те шарламарĕç.

Американецсем пĕлтернисем çӳлте асăннă фактсене мĕн чухлĕ пĕчĕклетме пултарнă-ха? Хăйсен пĕлтернисенче Куин, О'Нил тата Нисс халĕ нимĕн çинчен те йышăнмассĕ, вĕсем çапла калассĕ: вĕсене, Куин каланă пек, прĕксĕр «йышăнтарттарнă». Прĕксĕрленĕ пирки каланă пулсан, вĕсем пĕтĕм тĕнчери научнăй комиссинчен пулăшу ыйтма е хăйсене пачар пăхни çинчен çав комиссие пĕлтерме пултарнă. Ун вырăнне Инок, Нидхэн доктор ыйтăвĕсем çине ответлесе, çавăн çинчен пĕлтернĕ: унăн самолетне персе антарнă хыççăн, вăл хăйне асаплантараççĕ, тен, персе вĕлереççĕ пулĕ, тесе шухăшланă. Анчах «ман пистолета илнĕ хыççăн вĕсем ман алла чăмăртарĕç тата сигарета пачĕç. Чăнах та, пирĕн сыхăнусем тăванла пулнă».

Çакă тăватă çын халĕ çапла калассĕ: вĕсем ун чухне каласа панă чухне суйнă, çапла вара, комиссие те суйнă пулать. Вĕсем хăйсен çĕршывне намăса кĕртсе ӳкерсе пĕррехинче чăннипех те суйма хатĕр пулнă пулсан, мĕншĕн-ха вĕсем тепĕр хутĕнче те, уйрăммăнах курайманлăхпа намăс умĕнче, çар сучĕн хăрушлăхĕ умĕнче, тен, Валли-Форджри психиатри больницине ăсатас хăрушлăх умĕнче малтанхи пекех суйма пултараймассĕ?

Юлашкинчен, эсир: мĕншĕн-ха Хĕрлĕ Хĕресĕн Пĕтĕм тĕнчери комитетне тĕпчесе пĕлме ирĕк паман, тесе ыйтăр. Ответ сирĕншĕн паллă пулмалла. Пĕррĕмĕшĕнчен, Пĕтĕм тĕнчери комитет текенскерĕ, тĕрĕссипе илсĕн, тĕнчери комитет пулса тăмасть. Вăл Швейцарири хăйсемшĕн çеç тăрăшакан çынсенчен тăрать. Иккĕмĕшĕнчен, ку комитет, эсир каланă тăрăх, никама пăхăнман тата сыхăлăхлă экспертсен комитечĕ пулса тăрать иккен. Çак комитет Освенцимри хăрушă вилĕм лагерьне пăхса тухнă пулнă. Çав лагерьте газсемпе пăчăхтарса тата çунтарса 4 миллион еврее вĕлернĕ. Тискерлĕх енчен илсен, этемлĕх историйĕнчи нимĕнле тискер ĕç те çав лагерьпе танлашма пултараймасть. Хĕрлĕ Хĕресăн Пĕтĕм тĕнчери комитечĕ лагере пырса кайнă чухне, лагерь ĕçленĕ чухне, мĕн пирки те пулин ӳпкелешме кирлине нимĕн те тупайман. «Никама пăхăнман тата сыхăлăхлă» экспертсем çакăн пек ĕнтĕ.

Америкăри информаци служби «хаçатсем валли» пичетлесе кăларакан бюллетеньсене ĕненсе ларни кăна çителĕксĕр. Сăмах, историпе этемлĕх хăйĕн приговорне йышăнма кирлĕ ыйтусем çинчен пырать. Ку приговор мĕнле пуласси пирки эпĕ шикленместĕп. Мĕншĕн тесен эпĕ çакна шанса тăратăп: нацистла Германи тĕлĕшпе пулнă пекех, тĕрĕслĕх сĕнтерсе çиеле тухĕ, хăй валли çул уçĕ. Эпĕ çак ĕç ытлашши хакла ан лартăр, тесе турра ĕĕл тăватăп.

Сире хисеплесе,

ХЬЮЛЕТТ ДЖОНСОН,

Кентербери соборĕн настоятелĕ.

Совет халăхĕпе туслă пурăнассишĕн

РИМ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Унита» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 21-мĕшĕнче Италире «Итали хĕрарăмĕсемпе совет халăхĕн туслăхĕн эрни» пуçланнă. Ăна Италипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхне ирттернĕ май Италири хĕрарăмсен союзĕ тата «Итали—СССР» обществи пуçарнипе ирттереççĕ.

Эрне хушшинче конференцисем, митингсемпе пухусем нумай ирттереççĕ, чылай кинофильмсем кăтартаççĕ тата вечерсем пулаççĕ.

ĔÇ ТУПАЙМАН ÇЫНСЕН ДЕМОНСТРАЦИЙĔ

БЕРЛИН, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Нейес Дейчланд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 19-мĕшĕнче Хĕвеланăç Берлинри Нейкельн районĕсенче (Америка оккупацилесе тăракан сектор), çавăн пекех Шпандаупа Тиргартенра (Англи оккупацилесе тăракан сектор) ĕç тупайман çынсен демонстрацийĕ пулса иртнĕ. Демонстрантсем ĕç тупса пама тата хĕлле ĕçleme ăшă тумтир пама требовани лартнă.

ИРАНРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Иранри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, çар сучĕ 14 çынна тӳрре кăларнă. Вĕсене полицин тĕп управленийĕн начальникне Афшартуса вĕлернĕ тесе айăпланă пулнă.

Совет Союзĕпе Германин хутăш комиссийĕн ларăвĕ

БЕРЛИН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Берлинра Совет Союзĕпе Германин хутăш комиссийĕн виççĕмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Комисси Совет Союзĕн Германири 33 предприятине тӳлевсĕрех Демократиллĕ Германи Республикине парассине пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлет.

Комисси протокол проектне пăхса тухнă. Протокол Совет Союзĕн Германири 33 предприятине Демократиллĕ Германи Республикине тӳлевсĕрех памалли йĕркене тата предприятисене пани çинчен икĕ енĕн представителĕсем алă пусмалли актсен проектне палăртать. Комисси çав актсем çине алă пусма полномочи илнĕ çынсене çирĕплетнĕ.

Комисси йышăннă решени тăрăх, предприятисене Демократиллĕ Германи Республикине параччен çак предприятисен директорĕсене — нимĕç çыннисене предприятисене ертсе пырас тĕлĕшпе мĕнпур ĕçсене тума, 1954 çулта хуçалăхра туса ирттермелли ĕçсем тĕлĕшпе, уйрăммăн илсен, производствăпа финанс планĕсене, материальнăй технически снабжени планĕсене тăвас, продукци сутас, капитальнăй строительство тĕлĕшпе, техникăлла документаци хатĕрлес тата тивĕçлĕ договорсем тăвас тĕлĕшпе сыхăннă ĕçсене тума ирĕк панă.

США-па Пакистан хушшинчи çар союзĕ çинчен

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Экономист» журнал «Америка, Инди, Пакистан» ятлă статьяра çапла çырать: Даллес Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Пакистан хушшинче çар союзĕ тăвасси çинчен калаçусем пыраççĕ тенине хирĕçлесе каланă «Индипе Пакистан хушшинчи сыхăнусенчи йывăрлăх ӳссе пырассине чарса лартайман».

Журнал çакăн çинчен асăрхаттарать: Пакистанра ют çĕршывсен базисене туни кăткăс ыйту пулса тăрать. Çак ыйту тĕлĕшпе Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Пакистанăн Англипе тата Индипе канашласа пăхмалла пулнă.

США-ра ПРОФСОЮЗ ЧЛЕНĔСЕНЕ ХĔСĔРЛЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки вунă кун хушшинче сенатăн тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Маккарти ертсе пыракан подкомиссийĕ Свенектадри (Нью-Йорк штачĕ) тата Массачузетс штатĕнчи чылай хуласенчи «Дженерал электрик компани» ятлă компанийĕн завочĕсенче «коммунистла шпионажа» хирĕç кĕрешнĕ ятпа электропромышленноçри тата радиопромышленноçри рабочисен Пĕрлешӳллĕ профсоюзĕн членĕсене хытă хĕсĕрлет.

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Олбанра (Нью-Йорк штачĕ) сенатăн Маккарти ертсе пыракан подкомиссийĕ электропромышленноçпа радиопромышленноçри рабочисен Пĕрлешӳллĕ профсоюзĕн членĕсене допроса чĕнтернĕ.

Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Олбанран пĕлтернĕ тăрăх, Маккарти çакна шанса тăнине палăртнă: конституци панă правăсемпе усă курса унăн ыйтăвĕсем çине ответсем пама килĕшмен мĕнпур рабочисене ĕçрен кăлараççĕ.

Ноябрĕн 18-мĕшĕпе 19-мĕшĕнче сенатăн Маккарти ертсе пыракан подкомиссийĕ Бостонра лару ирттернĕ. Олбанри пекех, Бостонри ларусенче те çакă паллă пулнă: свидетельсем, хăйсем йышăннă тăрăх, нумай çул хушши тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен федеральнăй бюро членĕсем пулнă.

Бостонра подкомисси ларăвĕсем пулнă хыççăн, Линра (Массачузетс штачĕ) электропромышленноçпа радиопромышленноçри рабочисен Пĕрлешӳллĕ профсоюзĕн вырăнта ĕçлекен икĕ работникне ĕçрен кăларнă.

«Дейли уоркер» хаçатăн Бостонри корреспонденчĕ ноябрĕн 20-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, электропромышленноçпа радиопромышленноçри рабочисен Пĕрлешӳллĕ профсоюзĕн председателĕ Фитцджеральд заявлени пичетлесе кăларнă. Унта вăл Маккарти электропромышленноçпа радиопромышленноçри рабочисен Пĕрлешӳллĕ профсоюзĕн членĕсене хĕсĕрленине хирĕç протестлет. Заявленире, уйрăммăн илсен, çапла каланă: «Маккарти туса ирттерекен ĕç пĕтĕм çĕршывĕпе туса ирттерекен кампанийĕн пĕр пайĕ пулса тăрать. Унăн тĕллевĕ халĕ конгресса пăхса тухма тăратнă, рабочисене хирĕç пыракан закона йышăнтарасси пулать. Вăл закон, «саботажпа» «шпионажа» хирĕç кĕрешнĕ ятпа профсоюз членĕсене законсăр йĕркепе ĕçрен кăларса яма ирĕк парать.

XVIII-мĕш ĕмĕрти чăваш архитекторĕ

1950 çулта Ленинградри университетра вĕренекен Р. Д. Люлина университет вестникĕнче «Петр Егоров—Çуллахи садăн тимĕр картине тыттарнă архитектор» ятлă статья пичетлесе кăларчĕ. Çав статья тăрăх эпир Егоров чăваш çынни пулнине, вăл Петербургри Çуллахи садăн эрешлĕ тимĕр картипе хапхине тунă çĕрте тата Петергофри (хальхи Петродворецри) Мраморнăй кермене (двореца) лартнă çĕрте пысăк та чаплă ĕçсем тунине, талантлă архитектор пулнине пĕлтĕмĕр. Çак кунсенче Ленинградри палăксене сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен Государство инспекцийĕ Чăвашсен тĕпчев институтне Петр Егоров çинчен калакан архив документĕсене ярса пачĕ. Эпир хамăрăн хаçата вулакансене, çав документсем тăрăх, Егоров тунă ĕçсемпе тата унăн пурнăçĕпе кĕскен те пулин паллаштарасшăн.

Петр Егоров 1731 çулта çуралнă (çуралнă вырăнĕ халлĕхе паллă мар-ха, пирĕн институт ку тĕлĕшпе историе тĕпчекен Тĕп архивĕн Ленинградри пайне çĕнĕ материалсем ыйтса ячĕ; Егоров вилнĕ çул та паянхи куна паллă мар-ха, хăшпĕр документсем ăна 1790 çулта вилнĕ тесе кăтартаççĕ, анчах çак хата пирĕншĕн хирĕçӳллĕ-ха, унпа эпир килĕшместпĕр, тĕрĕссине шыратпăр). Хăй çинчен Петр Егоров хăйĕн 1755 çулта çырнă çырăвĕнче (прошенийĕнче) тĕплĕн каласа парать, ăна вăл Елизавета Петровна императрица патне çырнă. «Сире эпĕ нуç таятăп, çĕре ӳксе пуççапатăп,—çырнă Петр Егоров,—эпĕ усал турăсемпе киреметсене пуççапса пурăнма пăрахнă чăваш, христиансен тĕнне йышăнса таса шыва кĕртнĕ çын, хам мĕн ыйтнине, аслă патшамăр, сире каласа парасшăн: 1) Çураласса эпĕ чăваш хушшинче, чăваш килйышĕнче çуралнă, анчах та мана ача чухнех пĕр генерал-майор, князь, Дадиан господин хăйпе пĕрле Российăна илсе кайрĕ. Вăл мана православнăй тĕне кĕртрĕ, ун патĕнче эпĕ паян кунччен пурăнтăм, çав генерал-майор мана вырăс чĕлхине вĕрентрĕ, вулама, çырма, шутлама та вĕрентрĕ, сăн ӳкерме, картинăсем тума та кăштах вĕрентрĕ. Анчах та çав господин генерал-майор патĕнче эпĕ чура шутне илнĕ çын пулса мар, хăй кăмăлĕпе илнĕ ирĕклĕ çын пулса пурăнтăм. 2) Вĕренсе илнĕ ăс-хакăла малашне те сарса пырас тесе, çунса тăракан чун-чĕрепе, иксĕлми ĕмĕтпе архитектура наукинче ĕçлес тесе, çавна пула вара, аслă патшамăр, сирĕн мухгавăрпа чапăра таттăх та пысăкрах тăвас тесе, мана сире пăхăнса тăракан архитектура ведомствине вĕренме илме, ырă кăмăллă пулма йăлăнатăп. Петр Егоров». (Егоров çырăвне эпир кунта кĕскетсе куçартăмăр, çав вăхăтрах XVIII-мĕш ĕмĕрти чĕлхе уйрăмлăхĕсене сыхласа хăварма тăрăшрăмăр).

Çак илсе кăтартнă документран Петр Егоров тĕне кĕмен чăваш пулни паллă. Тĕне кĕмесĕр вăл 10—12 çул пурăннă пулас, мĕншĕн тесен чăвашсене 1740 çул хыççăн тин йышлăн тĕне кĕртме тытăннă. Егоровăн тĕп чăвашла ячĕпе хушамачĕ те пирĕншĕн халлĕхе паллă мар-ха. Вырăсла хушаматпа ят ăна Дадиан князь панă пулмалла. Ача тăлăх пулнă-и е унăн ашшĕ-амăшĕ пулнă-и—ку та паллă мар-ха. 1730—1760 çулсенче чухăн чăвашсем хушшинче, пурлă-çуклă пурнăçа пула, ачасене пуянсем патне темиçе çула тарçа парас йăла е парăмсене тӳлесе татма сутас йăла пулнă. Ачана 5—7 тенке сутнă. Хăш-хăш ача, срок тухсан, киле таврăннă, хăшне-пĕрне вара инçете илсе кайнă. Петр Егоров шăпи те çавăн пекех пулнă пулас. Хăй çырăвĕнче вăл крепостной çын мар, ирĕклĕ çын пулни çинчен çырать. Çав çырăва (прошение) çырнă чухне Егоров 24 çулхи çын пулнă. Эпир куртăмăр ĕнтĕ, унта вăл хăй чăваш пулни çинчен те тӳрех çырнă, мана чăваш тесе çул памĕç, хĕсĕрлеме пăхĕç тесе вăл вăтанса-хăраса тăман.

«Архитектура наукине вĕренме» илме Егорова Дадиан генерал-майор хăех пулăшнă. Ун ячĕпе панă рекомендацинче вăл çапла çырнă: «Егоров ман патăмра пурăннă чухне вулама, çырма, шутлама тата геометрие вĕренчĕ. Сăнсем ӳкерме, картинăсем тума та кăштах хăнăхрĕ. Вĕренесе тăрăшса, лайăх вĕренсе пычĕ, хăйне чипер тыткаларĕ. Пултаракан çын».

Егорова вырăс архитекторĕ Семен Волков арифметикăпа тата геометрипе экзамен тыттарнă, чертеж ӳкерсе илтернĕ. Вăл та унăн пĕлĕвĕпе ĕçне пысăк хак панă.

1755 çулта вара Елизавета Петровна императрица уйрăм Указ тăрăх «тĕне кĕнĕ Петр Егоров чăваша» Волков ертсе пыракан архитекторсен ушкăнне ученик пулса ĕçleme илет. 1761 çулта Егорова 3-мĕш класлă помощник туса хураççĕ, 1763 çулта прапорщик ятне, 1765 çулта пĕрремĕш класлă архитектор ятне, 1768 çулта архитектурăра лайăх ĕçленĕшĕн, хăй ĕçне таран пĕлнĕшĕн титулярнăй советник ятне пăраççĕ.

«Суб-архитектор» (архитектора пулăшакан çын) пулса Петр Егоров чаплă Растрелли ертсе пыракан архитекторсен ушкăнĕнче те ĕçленĕ. Растрелли хăйĕн хучĕсем çине, «Егор» тесе çырса хунă, хушаматне лартма маннă пулас.

Мраморнăй керменăн проектне Р. Ринальди тунă тесçĕ, анчах та çав çуртa çав проект тăрăх Петр Егоров тутарнă. Апла пулсан, вăл Ринальдипе пĕрлех Мраморнăй Кермене тутарнă çынсенчен пĕри.

Çуллахи садăн эрешлĕ тимĕр картине тытас тĕлĕшпе Петр Егоров тăратнă проекта ют çĕршывран килнĕ Фельтен архитектор пăхса тухнă, ăçлах ăна çирĕплетнĕ, çавăнпа та Фельтене халиччен çав тимĕр картана тыттарнă çын тесе шутланă, чăннипе илсен, ун авторĕ те, ăна тыттараканĕ те Петр Егоров пулнă. Ют çĕршывсенчен чĕнсе илнĕ архитекторсем вырăс архитекторĕсене путарса пыма тăрăшнипе Петр Егоров хушамачĕ те нумай вăхăт хушши паллă пулман.

П. ГРИГОРЬЕВ,

истори наукисен кандидачĕ.

Пĕлтерни

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотека суртĕнче докладчиксемпе агитаторсем валли инструктивлă доклад пулать. Тема: «СССР Конституцийĕ — социализм çĕнтернĕ çĕршывăн конституцийĕ».

Докладчик—Д. Я. Митьков юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор заместителĕ
М. Н. ЯНИМОВ.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1951-мĕш çулхи кăларăм)

4-мĕш выляра выигрышсем тухнине кăтартакан

СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1953 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнче Николаев хулинче пулнă.

Таблицăра 100 тенкĕлĕх облигацисем çине выигрышсем тухнине кăтартнă. Выигрыш суммине облигаци хакĕ те кĕрет.

Заемăн мĕнпур разрячĕсенчи çак серисемпе облигацисен номерĕсем çине выигрышсем тухнă:

Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ	Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ
100120	07*)	1.000	111479	1—50	200
100196	1—50	200	111554	1—50	200
100205	1—50	500	111767	1—50	500
100294	04*)	1.000	112027	09*)	1.000
100612	39*)	1.000	112054	23*)	1.000
100715	13*)	1.000	112126	1—50	200
100748	31*)	1.000	112172	10*)	1.000
100811	24*)	1.000	112344	1—50	200
100946	31*)	1.000	112398	25*)	1.000
101047	1—50	200	112523	11*)	1.000
101055	34*)	1.000	112743	1—50	200
101089	04*)	1.000	112823	31*)	1.000
101281	43*)	1.000	112898	01*)	1.000
101326	1—50	500	112993	1—50	200
101545	1—50	500	113247	14*)	1.000
101669	45*)	1.000	113367	35*)	5.000
101697	1—50	200	113439	17*)	1.000
101781	16*)	5.000	113534	01*)	1.000
101814	31*)	1.000	113586	50*)	1.000
101850	1—50	200	113638	35*)	1.000
101894	17*)	1.000	113675	42*)	25.000
101941	19*)	1.000	113762	1—50	200
102265	02*)	1.000	113776	1—50	200
102306	1—50	200	113823	50*)	1.000
102508	1—50	200	113881	45*)	1.000
102689	1—50	500	113997	1—50	200
102768	32*)	1.000	114047	27*)	1.000
102774	35*)	1.000	114077	1—50	200
102891	1—50	200	114151	44*)	1.000
102900	47*)	1.000	114168	1—50	200
102917	13*)	1.000	114243	03*)	1.000
102925	33*)	5.000	114411	46*)	5.000
102990	08*)	1.000	114416	36*)	1.000
102994	18*)	1.000	114433	20*)	10.000
103406	01*)	1.000	114583	1—50	500
103440	1—50	200	114592	1—50	200
103509	1—50	500	114801	15*)	10.000
103864	1—50	500	115056	15*)	1.000
104268	1—50	200	115154	17*)	1.000
104284	1—50	200	115183	35*)	10.000
104573	1—50	500	115275	1—50	200
104689	09*)	1.000	115375	35*)	1.000
104798	18*)	1.000	115383	1—50	200
104994	1—50	200	115387	1—50	200
105468	1—50	200	115527	28*)	1.000
105496	43*)	1.000	115679	15*)	1.000
105771	24*)	1.000	115688	33*)	1.000
105871	1—50	500	115769	13*)	1.000
106562	15*)	1.000	115815	04*)	10.000
106716	1—50	200	115831	46*)	1.000
106762	30*)	1.000	115850	1—50	200
106830	1—50	200	115954	32*)	1.000
107154	37*)	1.000	116025	1—50	200
107460	18*)	10.000	116042	27*)	5.000
107520	31*)	1.000	116069	44*)	1.000
107604	36*)	1.000	116071	09*)	1.000
107714	1—50	500	116126	28*)	1.000
107759	14*)	1.000	116275	49*)	1.000
107821	1—50	200	116338	31*)	1.000
107825	1—50	200	116396	1—50	500
107983	1—50	200	116668	30*)	1.000
108006	1—50	500	116746	06*)	1.000
108026	1—50	200	116753	1—50	500
108204	35*)	1.000	116911	38*)	5.000
108267	43*)	5.000	116947	37*)	1.000
108820	13*)	1.000	117003	36*)	1.000
108987	49*)	1.000	117263	34*)	1.000
109042	20*)	1.000	117306	45*)	1.000
109292	10*)	1.000	117691	1—50	200
109741	1—50	200	117851	38*)	1.000
109746	26*)	1.000	117900	28*)	1.000
109749	47*)	1.000	117948	1—50	500
109923	10*)	1.000	117982	50*)	1.000
109940	1—50	500	118267	28*)	5.000
109965	1—50	200	118602	21*)	1.000
110046	1—50	500	118701	16*)	1.000
110070	1—50	500	118851	19*)	1.000
110159	34*)	1.000	119010	23*)	1.000
110168	05*)	1.000	119023	24*)	1.000
110180	50*)	5.000	119039	1—50	200
110255	1—50	200	119058	07*)	1.000
110365	45*)	1.000	119121	22*)	1.000
110651	04*)	1.000	119200	1—50	200
110736	37*)	1.000	119210	1—50	200
110806	1—50	200	119280	02*)	1.000
110929	15*)	1.000	119310	1—50	500
111168	50*)	1.000	119334	1—50	200
111224	1—50	200	119387	32*)	1.000
111233	29*)	1.000	119484	15*)	1.000
111275	1—50	500	119679	1—50	200
111306	50*)	5.000	119707	31*)	1.000

*) Çак серири облигацисен ытти 49 номерĕ çине 200-шер тенкĕ выигрыш тухнă.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСУДАРСТВО КРЕДИЧĔН УПРАВЛЕНИЙĔ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 25-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Юратнă хĕр» Ноябрĕн 26-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Мачеха».

Спектакль 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 25-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Цитадель славы».

Спектакль 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 25-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Серебристая пыль».

Сеанссем пуçланаççĕ: 14 сехет те 15 минутра, 16 с. 15 м., 18 с. 15 м., 20 с. 15 м. тата 22 с. 15 м.

«ЭЛЕКТРИК» КЛУБРА—ноябрĕн 25-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Серебристая пыль».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул Володарского 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-60, обзорсем пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2788. Тираж 20,000 экз.